Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ИЙУҪ 6 ТУНТИКУН
128 (4941) №

Чӑваш Коммунӗ

21-мӗш ҫул тухать ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӑн хаҫачӗ Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСЕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 6—23

Кандидатсемшӗн большевикла агитацилер

Епӗр РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлав кампанин татӑкла тапхӑрне кӗтӗмӗр. Хуласенче, йалсенче коммуниссемпе партире тӑманнисен блокӗ тӑратнӑ, округсенчи суйлав комиҫҫисем регистрациленӗ кандидатсемшӗн агитацилес ӗҫ сарӑлса пырать. Халӗ суйлава хатӗрленес пӗтӗм ӗҫ суйлав участкине куҫать. Пирӗн задачӑ—суйлав участкисенче политикӑлла агитаци ӗҫне большевикла организацилесси пулать. Ҫак пысӑк ӗҫре округсенчи суйлав умӗнхи канашлусенче суйланӑ довереннӑйсем пысӑк выранта тӑмала. Вӗсем ҫине, партири тата партире тӑман большевиксем ҫине, халӑх шаннӑ ҫынсем ҫине хисеплӗ те ответлӑ ӗҫ—Верховнӑй Советсене депутата суйлама палӑртнӑ кандидатсемшӗн агитацилес ӗҫ хунӑ. Пирӗн социалисӑмла аслӑ ҫӗршывра халӑх шаннинчен пахи те хакли урӑх ҫук. Пирӗн парти, Сталин йулташ йаланах халӑх шанса панӑ ӗҫе йуратма, ӑна тӑрӑшса тума верентеҫҫӗ. Довереннӑйсен ҫакна асра тытса коммуниссемпе партире тӑманнисен блокӗ тӑратнӑ кандидатсемшӗн ҫине тӑрса агитацилемелӗ.

Партири тата партире тӑман кашни большевик умӗнче пӗр задач: большевикла агитаци ӗҫне анлӑн сарса, участкӑри суйлавҫӑсене пурне те суйлава хутшӑнтармала тӑвасси, округра регистрациленӗ кандидатшӑн пурин те сасӑламала тӑвасси. Довереннӑйсен пӗтӗм ӗҫӗ ҫак тӗп задачӑна пӑхӑнмала.

Суйлав участкинчи агитаци политикӑ тӗлӗшӗнчен ҫирӗп, витӗмлӗ пулмала, тӑшмансем пире хирӗҫле ӗҫ тума хӑтланнине ҫийӗнчех ҫапса ҫӗмӗрме пулӑшмала. Кашни суйлавҫӑна кандидатӑн общӗчӗствӑлла-политикӑллӑ ӗҫӗ ҫинчен вӑл социалисӑмла тӑван ҫӗршыв умӗнче тунӑ ӗҫсем ҫинчен пӗлсе, пурнӑҫри чӑн-чӑн фактсемпе тӗплӗн каласа памала. Ҫакна шута илмелӗ: пирӗн кандидатсем пурте халӑх хушшинчен тухнӑ ҫынсем, вӗсен кашнин пурнӑҫӗ, ӗҫӗ ССР Сойузӗнчи социалисӑм ҫӗнтерӗвӗнче палӑрса тӑрать. „Пирӗн хапрӑксенче тата савӑтсенче капиталиссемсӗр ӗҫлеҫҫӗ. Ӗҫе халӑхтан тухнӑ ҫынсем йертсе пыраҫҫӗ. Ҫакна пирте ӗҫри социалисӑм тесе калаҫҫӗ те. Пирӗн уйхирсенче ӗҫҫыннисем помещиксемсӗр, кулаксемсӗр ӗҫлеҫҫӗ. Ӗҫе халӑхран тухнӑ ҫынсем йертсе пыраҫҫӗ. Ҫакна пирте йӑлари социалисӑм, ҫакна пирте ирӗклӗ, социалисӑмлӑ пурнӑҫ тесе калаҫҫӗ" (Сталин). Кандидатшӑн агитацилесе хамӑрӑн ирӗклӗ, социалисӑмлӑ пурнӑҫа пур йенчен те кӑтартса памала. Совет халӑхӗ большевиксен парти йертсе пынипе социалисӑм строительствин пур участкисенче те историлӗ ҫӗнтерӳсем туни ҫинчен цифӑрсемпе, фактсемпе каласа пани суйлавҫӑна, унӑн коммуниссемпе партире тӑманнисен сталинла блок кандидачӗсемшӗн, тӑван ҫӗршыв ӗҫӗшӗн, Ленин—Сталин ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫлекен ҫынсемшӗн ҫеҫ сасӑлама нимӗнрен ытларах ӗнентерет.

Довереннӑйсен ӗҫӗсемшӗн, суйлав участкинчи пӗтӗм организацилӗ, агитаципе пропагандӑ ӗҫӗсемшӗн партин тата советсен районти организацисем ответлӑ. Довереннӑйсене хӑйсене шанса панӑ ӗҫсене ӑнӑҫулӑ пурнӑҫа кӗртме куллен пулӑшмала. Довереннӑйсене пулӑшма суйлав участкисенчи чи шанчӑклӑ йулташсене—коммуниссене, комсомолӗцсене, партире тӑманнисене уйӑрмала. Парти организацисемпе советсен довереннӑйсене час-часах пухмала, суйлав участкинче агитаципе пропагандӑ ӗҫне организацилеме пулӑшмала.

Анчах та чылай ҫӗрте халӑх суйланӑ довереннӑйсем хӑйсен ӗҫне тытӑнман. Чылай ҫӗрте партипе совет организацисем суйлав умӗнхи округ канашлӑвӗсенче довереннӑйсем уйӑрнӑ хыҫҫӑн, кандидатсемшӗн агитацилес ӗҫ хӑй тӗллӗнех пуласса шанса лӑпланса ларнӑ. Чылай райкомсем хӑйсем йенчен агитаторсем уйӑрнӑ хыҫҫӑн, довереннӑйсен ӗҫӗ нимӗн йертсе пымасӑрах пуласса шаннӑ. Шупашкарти 14-мӗш суйлав участки тӑрӑх уйӑрнӑ довереннӑйсем нимӗн те тумаҫҫӗ, участкӑра пулмаҫҫӗ. Вӗсем суйлав комиҫҫи—Селиванӑвӑ йулташ пуху пухса парасса кӗтсе лараҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах участкӑри чылай суйлавҫӑсем 2-мӗш суйлав округӗ тӑрӑх Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама кама тӑратнине те пӗлмеҫҫӗ. Ҫавӑн пекех агитаторсен ӗҫӗ те курӑнмасть. Партин Шупашкарти хула комитечӗ агитаторсене йертсе пыма Филатӑв йулташа уйӑрнӑ. Вӑл агитаторсене мар, участкӑри довереннӑйсене те пӗлмест. 13-мӗш участкӑра довереннӑй Йакӑвлӗв йулташ суйлавҫӑсене пурӗ те пӗр хут анчах пухса калаҫнӑ. Участкӑра суйлавҫӑсен хисепӗ 1.400 ҫынтан иртет, пухура пурӗ те 60 ҫын ҫеҫ пулнӑ. Агитаци ӗҫне йертсе пыма уйӑрнӑ ҫын кам иккенне участкӑри суйлав комиҫҫи председателӗ те пӗлмест. Хула комитечӗ довереннӑйсене пӗрре пухса калаҫнӑ та, урӑх нимӗн те туман. Довереннӑйсем нумайӗшӗ ҫӗнӗ ҫынсем. Вӗсене кулленхи ӗҫре пулӑшни кирлӗ. Анчах час-часах хула комитечӗ йенчен ҫак пулӑшӑва илме пултараймаҫҫӗ, вара аптранипе хула советне каяҫҫӗ.

Уйрӑм пуҫламӗш парторганизацисем, сӑмахран, тир-сӑран савӑтӗнчи парторганизаци, агитаторсен ӗҫне организацилесси, вӗсене куллен йертсе пырасси ҫинчен шутламасть. Ийунӗн 3-ӗнче Ворошилӑв урамӗнчи килхуҫи хӗрарӑмсен пухӑвӗ, пуҫламӗш парторганизаци уйӑрнӑ агитатор пулман пирки, саланса кайнӑ.

Ҫак фактсем вӗсем кандидатсемшӗн агитацилес ӗҫ начар пыни ҫинчен калаҫҫӗ. Довереннӑйсене, агитаторсене партин комитечӗсен кулленхи ӗҫре пулӑшса, йертсе пымала.

Кандидатсемшӗн агитацилес ӗҫре пирӗн большевикла пичетӗн пите пысӑк выранта пулмала. Районри, республикӑри хаҫатсен округри суйлав комиҫҫисем регистрациленӗ кандидатсем ҫинчен тӗплӗн сутатмала. Анчах та ку йенӗпе пирӗн хаҫатсем питех те начар ӗҫлеҫҫӗ. Районри хаҫатсенчен чылайӗшӗ кандидатсем ҫинчен округри суйлав комиҫҫисем йышӑннӑ официаллӑ материалсене пичетлесе кӑларнипех лӑпланса лараҫҫӗ.

Парти организацисен, довереннӑйсен хисеплӗ ӗҫӗ вӑл—суйлавҫӑсен пӗтӗм массине коммуниссемпе партире тӑманнисен блокӗ тӑратнӑ кандидатсемшӗн сасӑлама пӗрлештересси пулать.

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин IV-ш конференцийӗ

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечӗн отчочӗ тӑрӑх пренире тухса калама пурӗ 90 делегат ҫырӑннӑ, вӗсенчен 50 делегачӗ тухса каланӑ.

Ийунӗн 4-мӗшӗнчи ирхи ларура Оҫипӑв (Ҫутӗҫ Халӑх Кмиссариачӗ), Шишкин (Партколлеги ҫекретарӗ) йулташсем тухса каланӑ хыҫҫӑн прени хупӑнать. Председател йулашки сӑмах калама ПСК(б)П Шупашкар хула комитечӗпе Обком ҫекретарне Иванов йулташа сӑмах парать.

— Конференцире хула комитечӗн ӗҫне критикленисем пурте тӗрӗс, пурте тивӗҫлипе пулчӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн манӑн ҫакна калас килет. Конференцире тата партин пуҫламӗш организацисенчи отчотпа суйлав пухӑвӗсенче парторгсен отчочӗсем тӑрӑх тухса каланӑ коммуниссем парторганизацин ӗҫне лайӑхлатма нумай сӗнӳсем парса хӑварчӗҫ. Ҫав сӗнӳсене хула комитечӗн ҫӗнӗ составӗн тата парторгсемпе партком ҫекретарӗсен кулленхи ӗҫре пурнӑҫласа пымала. Коммуниссен кашни сӗнӗвне хисепе илсе ӗҫлесе пырсан, пирӗн чӑваш парторганизации ӗҫӗ темиҫе хут аванланмала, массӑпа ҫыхӑнса ӗҫлесси те ҫирӗпленмелле,—тет Иванов йулташ.

Иванов йулташ парторганизацине троцкиссенчен, бухаринцӑсенчен, буржуалӑ националиссенчен тата ытти тӑшмансенчен тасатас кӗрешӗве сӳрӗклетме йураманни ҫине, большевикла сыхлӑха, критикӑпа самокритикӑна ҫӳлте тытса пырасси ҫине кӑтартса хӑварчӗ.

— Пирӗн,—тет Иванов йулташ,—пысӑк ӗҫсем ҫинчен ҫеҫ мар каламала, хуҫалӑхри пӗчӗк ӗҫсене те манса хӑвармала мар. Мӗншӗн тесен, ҫав пӗчӗк ӗҫсемех тепӗр чухне ӗҫре пысӑк чӑрмав тума пултараҫҫӗ.

Конференци ПСК(б)П хула комитечӗн политикӑлла ҫулйӗрне тӗрӗс, практикӑлла ӗҫне ҫителӗклӗ тесе йышӑнчӗ.

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечӗн отчочӗ тӑрӑх резолюци йышӑннӑ хыҫҫӑн, конференци мандат комиҫҫи председателӗн—Соколовӑ йулташӑн докладне итлерӗ. Ҫакӑнпа конференцин ирхи ларӑвӗ хупӑнчӗ.

Ийунӗн 4-мӗшӗнче конференцин каҫхи ларӑвӗ пулман. Конференци делегачӗсем пурте Канаш—Шупашкар трасси ҫинче рельсасем хывса пӗтерне йатпа митингра пулнӑ.

Ийунӗн 5-мӗшӗнчи ирхи ларура ПСК(б)П хула комитечӗн ҫӗнӗ составне суйлама кандидатсем тӑратнӑ.

ПСК(б)П Мускав хула комитечӗн пленумӗ

Ийунӗн 4-мӗшӗнче ПСК(б)П Мускав хула комитечӗн пленумӗ пулса иртнӗ.

Пленум ПСК(б)П Мускав хула комитечӗн пӗрремӗш ҫекретарне А. И. Угарӑв йулташа, иккӗмӗш ҫекретарне — Г. А. Братановский йулташа, виҫҫӗмӗш ҫекретарне—В. П. Пронин йулташа суйланӑ.

(ТАСС).

Вилкинс килнӗ

Ийунӗн 4-мӗшӗнче ССР Сойузне Финлянди урлӑ Америкӑн паллӑ полйар тӗпчевҫи Джордж Губерт Вилкинс килнӗ.

ТАСС корреспонденчӗпе калаҫнӑ чухне, Вилкинс ҫапла каланӑ:

— Совет Сойузӗнче епӗ 6 кун пулатӑп. Епӗ ССР Сойузӗн ӑслӑлӑх общӗчӗственнӑҫне Полйарӑн тӗп бассейнне шыв айӗнчен каймалли експедици валли туна хамӑн ҫӗнӗ пройектпа паллаштарасшӑн. Шыв айӗнчен каймалли експедицин малтанхи опычӗ ӑнӑҫлӑ пулмарӗ, мӗншӗн тесен шыв айӗнчен ҫӳремелли кимӗне вӑл ӗҫе тума ҫителӗклӗ хатӗрлемен пулнӑ. Ҫӗнӗ експедици валли пӑр айӗнче вӑрӑм вӑхӑт хушши ӗҫлеме йурӑхла ҫӗнӗ кимӗ тӑваҫҫӗ. Ун ҫинче ҫиччӗ ҫын—икӗ инженер, икӗ учонӑй, икӗ штурмӑн тата радис пулать.

Епӗ, мана Ленинградра ӑшшӑн кӗтсе илнипе хумханатӑп. Уйрӑмах мана халӑх умӗнче мухтав илнӗ Совет Сойузӗн Геройӗ, географи ӑслӑлӑхӗсен докторӗ—Федорӑв чикӗре кӗтсе илни савӑнтарчӗ.

* * *

Вилкинс Арктикӑна тата Антарктидӑна кайнӑ хӑйулӑ експедицисенче пулнипе паллӑ.

1937—38 ҫулсенче Вилкинс Леваневски самолйотне шыранӑ ҫӗрте вӑйлӑн хутшӑннӑ тата Аляскӑпа Канадӑ хӗрринчен Полярӑн тӗп бассейнне патне темиҫе хӑйулӑ вӗҫев тунӑ.

(ТАСС).

Китайри фронтсенче

Вӑрҫӑ ӗҫӗсене пӑхса тухни

Китай ҫарӗсем Ҫуйчжоуна туртса илнӗ хыҫҫӑн, Йапони командованийӗ тӗп вӑйпа Кайфын хули ҫине тапӑнма тытӑннӑ, мӗншӗн тесен Кайфын вӑл Лунхай чукунҫулӗн районӗнче вӑрҫӑ ӗҫӗсем тӗлӗшпе питех те кирлӗ стратегилӗ пункт пулса тӑрать. Анчах, кунта та китайӗцсем Йапони ҫарӗсене хирӗҫ калама ҫук хыттӑн тӑраҫҫӗ. Йулашки кунсенче пысӑк ҫапӑҫусем Гуйде—Ланьфын районӗнче (Кайфынрен хӗвелтухӑҫнеле) пулса иртнӗ. Йапони командованийӗ тӗп вӑйсене пӗрлештерсе, Кайфын хулине виҫӗ йенчен пырса тапӑнса тытса илме шутлать.

Хӗвелтухӑҫ йенчен Йапони ҫарӗсем Лунхай чукунҫулӗ тӑрӑх тата шоҫҫе ҫулӗ тӑрӑх—чукунҫултӑн кӑнтӑртарах наступлени туса пыраҫҫӗ. Ҫавӑн пекех вӗсем Босйань районӗнче кӑнтӑрпа хӗвелтухӑҫ йенчен те (Аньхуей провинцин ҫурҫӗрпе хӗвеланӑҫ пайӗнче) наступлени туса пыраҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне, йапонӗцсем Хуанхе йуханшывӗн ҫурҫӗр ҫыранӗнчен кӑнтӑр йенне, Чженчжоу хулинчен хӗвеланӑҫнели вырӑна (Лунхай тата Бейпин—Ханькоу чукунҫулӗсем пӗрлешнӗ вырӑн) каҫма хӑтланаҫҫӗ. Хуанхе йуханшывӗн кӑнтӑр ҫыранӗ оборонӑ тӗлӗшпе ҫав районта пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ҫавӑнпа Йапони командованийӗ ку йуханшывӑн ҫурҫӗр ҫыравне пысӑк вӑйсем илсе пырса тултарнӑ. Анчах, китайӗцсем Йапони чаҫӗсене хӑйсен ҫарӗсене шыв урлӑ каҫарма чӑрмантараҫҫӗ ҫеҫ те мар, вӗсем тата йулашки кунсенче Йапони чаҫӗсем ҫине чылай ӑнӑҫлӑ контратакӑсем те тунӑ.

Кайфынрен хӗвелтухӑҫнеле Йапони ҫарӗсен 14-мӗш дивизийӗ Китай фронтне татса кӗрсе, Кайфын районне пырса кӗме шухӑшланӑ. Китай ҫарӗсем вӑл дивизине ҫавӑрса илнӗ. Дивизин пӗтӗм составӗнчен виҫҫӗмӗш пайне китайӗцсем йалтах пӗтерсе тӑкнӑ. Хуанхе йуханшывӗн ҫурҫӗр ҫыранӗнчен ҫав района ҫӗнӗ ҫар чаҫӗсем илсе пырас тесе Йапони командованийӗ темиҫе хутчен те тытӑнса пӑхнӑ. Анчах китайӗцсем вӗсене хирӗҫ калама ҫук хыттӑн тӑраҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра ҫав дивизи апат-ҫимӗҫсем тата вӑрҫӑ хатӗрӗсем ҫитменнипе пит аптӑрать. Йулашки кунсенче йапонӗцсем ӑна валли ҫимӗҫсене самолйотсем ҫинчен пӑрахса панӑ.

Шаньси провинцинче Китай ҫарӗсем йапонӗцсене ҫурҫӗр йенчеле пӗрмайах хӗссе, кайала чакарса пыраҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра йапонӗцсем тытса тӑракан чи кӑнтӑрти пункт Линьфынь хули пулса тӑрать. Йулашки кунсенче кӑна Китай ҫарӗсем йапонӗцсенчен 20 хула ытла туртса илнӗ.

Вӑтам Китайра йулашки вӑхӑтра пысӑк ҫапӑҫусемех пулман. Ҫак йулашки кунсенче ҫеҫ ҫапӑҫусем Лучжоу (Нанкинрен хӗвеланӑҫнеле) тата Уху районӗнче (Нанкинрен кӑнтӑрпа хӗвеланӑҫнеле) пуҫланнӑ. Йанцы йуханшывӗ патӗнче, Уху хулинчен тӑвалларах, Йапони канонеркисем шыв хӗрринче Китай позицисем ҫине персе тӑраҫҫӗ. Кӑнтӑр Китайра Йапони авиацийӗ кашни кун тенӗ пекех Кӑнтӑр Китайри чи пысӑк хула ҫине—Кантон ҫине пырса тапӑнать. Ҫав хулари халӑхсем йышлӑн пурӑнакан вырӑнсем ҫине тискеррӗн бомбӑсем пӑрахнипе йапонӗцсем унта пурӑнакан халӑхсене хӑратса тӑкма тата Китай командованийне фронтӑн тӗп участкисенчен айакала пӑрма хӑтланаҫҫӗ.

Анчах та, Йапони войеншчинин ӗмӗчӗ вырӑна кӗмест. Хӑйӗн тӑван ҫӗршывне захватчиксене мӗн ҫӗнтерсе тӑкиччен сыхлама хатӗр тӑракан Китайӑн паттӑр халӑхӗн ирӗкне йапонӗцсем нимӗнле тискерлӗхпе те хуҫайрас ҫук.

Йулашки хыпарсем

Чехословаки Франко генералпа ҫыхӑну тытма пуҫланӑ

Чехословаки правительстви Франко генералпа ҫыхӑну тытса тӑма йышӑннӑ. Ҫак йышӑну тӑрӑх, йутҫӗршыв ӗҫӗсен министерствинче Франко „правительствин" „полномочнӑй представителӗпе" Прагӑра тата Франко „правительстви" ҫумӗнче „генеральнӑй агентствӑсем" текен официаллӑ представительсем тӑвасси ҫинчен нотӑсем парса илнӗ.

Чехословакин чылай хаҫачӗсем правительствӑн ҫакнашкал йышӑнуне хирӗҫлеҫҫӗ.

Чехословаки правительстви тӗрӗс тумарӗ, унӑн йышӑнӑвӗ Чехословаки халӑхӗн сарлака массин шухӑшӗсемпе кӑмӑлӗсене хирӗҫ пырать, вӗсем пӗтӗм тӗнчери фашисӑма тата унӑн агентне Франкона хирӗҫ Испани халӑхӗ паттӑрӑн кӗрешнине кӑмӑлласа пулӑшнине хирӗҫ пырать,—тесе палӑртать пичет.

(ТАСС).

Йапони салтакӗсем хӑйсене хӑйсем вӗлерни

Йапони ҫарӗ политикӑпа морал тӗлӗшӗнчен кунран кунах начарланса пырать. Йапони командованийӗ Йапонин Тайцанре (Шанхайран ҫурҫӗрпе хӗвеланӑҫ йеннеле) тӑракан чаҫӗсенчен пӗрне фронта йарасси ҫинчен кӑларнӑ приказ салтаксене хыттӑн тарӑхтарса йанӑ. Ҫав приказа хирӗҫлесе темиҫе салтак хӑйсене хӑйсем вӗлернӗ. Ҫак кунсенчех Наньдаоре (Шанхай районӗ) Йапонин 14 салтакӗ хӑйсене хӑйсем вӗлернӗ.

(ТАСС).

И. В. МИЧУРИН

(Вилни виҫӗ ҫул тултарнӑ тӗле)

— Епӗ виҫӗ патша вӑхӑтӗнче пурӑнса курнӑ, — тесе ҫырать И. В. Мичурин „60 ҫул хушшинчи ӗҫ итогӗсемпе малашнехи ӗмӗтсем" йатлӑ статйара. Патша саманинче епӗ ҫат йӑваҫҫисене лайӑхлатас тӗлӗшпе темиҫе ҫул хушши ӗҫленӗ пулсан та, ӗҫшӗн епӗ нимӗнле шалу та, касӑран нимӗнле укҫа та, нимӗнле пулӑшу тавраш те илмен,—тет вӑл.

— Епӗ хам ӗҫлесе тупнӑ укҫатенкӗ ҫине ҫеҫ шанма пултарнӑ; йалан нушалӑхпа кӗрешсе пынӑ, сукӑлӑха нумай тӳснӗ, анчах касӑран инхҫан та пулӑшу тавраш ыйтман.

Паллӑ сатӑҫсем сӗннӗ тӑрӑх епӗ ҫӗрӗҫ департаментне темиҫе хут та хам ӗҫсем ҫинчен докладсем ҫырса йанӑ. Ҫав докладсенче епӗ сат йӑваҫҫисене лайӑхлатма кирли ҫинчен тата вӑл ӗҫ мӗн таран пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине кӑтартса парататтӑмччӗ. Анчах ман докладсенчен пурпӗрех нимӗн те тухмарӗ.

... Граждӑн вӑрҫи пӗтнӗ хыҫҫӑнах, Владимир Ильич Ленин хӑй ман ӗҫсем ҫине ҫавӑрӑнса пӑхрӗ. Владимир Ильич хушнӑ тӑрӑх 1922 ҫулта манӑн ӗҫ пит анлӑн сарӑлса кайрӗ. Ман ӗҫе М. И. Калинин йулташ та хутшӑнчӗ. Михаил Ивановӑвич ман йатпа тӑракан питомника икӗ хутчен хӑй пырса курчӗ.

...Революци хыҫҫӑн епӗ вара текех пӗр пӗччен ӗҫлемен. Манӑн помощниксем чылай пулчӗҫ. Ман ӗҫре вӗсем пит нумай пулӑшса пырса, сат тата селекци ӗҫне сарас тӗлӗшпе пит нумай вӑй хурса ӗҫлерӗҫ,—ҫапла ҫырнӑ И. В. Мичурин икӗ тӗрлӗ ҫистемӑри пурнӑҫ ҫинчен.

Иван Владимирӑвич Мичурин чаплӑ учонӑй. Унӑн паха та хӑйулӑ ӗҫӗсем ҫинчен Совет Сойузӗн тулашӗнче те пӗлеҫҫӗ. Совет ҫӗршывне вӑл темиҫе ҫӗр тӗрлӗ ҫӗнӗ сортлӑ улма-ҫырла йӑваҫҫисем, тем тӗрлӗ сортлӑ пахча-ҫимӗҫсем туса панӑ. Унӑн паха сортлӑ улмуҫҫийӗсем Чӑваш республикӗнче те ҫултан-ҫулах нумайланса пыраҫҫӗ.

Ку ҫеҫ те мар. И. В. Мичурин ӗлӗкрех ӑшӑ ҫанталӑкра ҫеҫ ӳсме пултарнӑ ҫимӗҫсене те ҫурҫӗр йенне куҫарма май тупса пачӗ. Унӑн Совет Сойузӗн вӑтам тӑрӑхӗнче ӳсме пултаракан иҫӗм ҫырли сортне нумайӗшӗ пӗлеҫҫӗ. Мичурин кӑларнӑ арбуз, дыня, помидор сорчӗсем вӑтам тӑрӑхра чи аван сортсем шутланаҫҫӗ.

Анчах И. В. Мичуринӑн ӗҫӗсем кусем ҫеҫ мар-ха. Вӑл туса хӑварнӑ чи пысӑк пуянлӑх, вӑл—сат йӑваҫҫисене тата пахча-ҫимӗҫсене лайӑхлатмалли ҫӗнӗ метод. Совет учонӑйӗсем хальӗ унӑн ӗҫне малалла анлӑн сарса, совет ӗҫҫыннисене валли паха та тухӑҫлӑ улма-ҫырла йӑваҫҫисен ҫӗнӗ сорчӗсене кӑларса, сарса пыраҫҫӗ.

Чехословаки ҫине тапӑнас хӑрушлӑх ӳснӗ

Муниципалитетсен суйлавӗсен йулашки турне хатӗрленнӗ май—вӗсем ийунӗн 12-мӗшӗнче пулса иртмелле, — генлейновӗцсем (Гитлерӑн Чехословакири агенчӗсем), фашисла Германи пулӑшнипе, Чехословакире суйлавсем умӗнхи террора вӑйлатнӑ. Германи пичечӗпе радио кашни кунах Чехословаки правительстви ҫине тапӑнаҫҫӗ, вӗсем Чехословаки ҫарӗсене чикӗ патӗнчи районсенчен илсе кайма хистеҫҫӗ.

Франци компартийӗн органӗ,—„Юманите" хаҫат хӑйӗн Прагӑ хулинчи корреспонденчӗн телеграммине пичетлесе кӑларнӑ, унта генлейновӗцсем пурне та шиклентерекен ҫӗнӗ инструкцисем илни ҫинчен каланӑ. Судет облаҫӗнчи гитлеровцисем, — тесе пӗлтерет хаҫат,—Гитлер Чехословакин Судет облаҫне ийунӗн 11-мӗшпе 12-мӗшӗнче ҫӗрле ҫитмелле текен хыпар сарнӑ.

Гитлерла пӑлхава (переворота), майӑн 21-мӗшӗнче тумала пулнӑскере, генлейновӗцсем ийунӗн 11-мӗшӗнче тума хӑтланса пахни пулма пултарать.

Фашиссен провокацилӗ политикине тата Англипе Франци Чехословаки правительствине хӗснине Чехословаки общӗчӗственнӑҫӗпе унти пичет хыттӑн сивлеҫҫӗ. Хаҫатсем ҫапла паллӑ туса ҫыраҫҫӗ. Чехословаки Англипе Францин ӑна килӗшекен сӗнӗвӗсемпе шуринпе те усӑ курма хатӗр, анчах Чехословаки Англин хӑшпӗр уйрӑм политикӗсен, Чехословаки урлӑ Дунай ҫӗршывӗсене кӗрсе кайма Германи валли алӑк уҫса пама тӑрӑшакансен сӗнӗвӗсемпе килӗшме пултараймасть. Ҫавӑн пекех Чехословаки правительстви Генлейнпа калаҫнӑ чухне Чехословаки ҫӗрне татса пама тата кама та пулин пӑхӑнса тӑракан пулма килӗшес ҫук.

Суйлавсен виҫҫӗмӗш турне хатӗрленес тӗлӗшпе Чехословакири коммунисла парти анлӑ кампани сарса йанӑ. Судет—Нимӗҫ облаҫӗнче коммунисла парти пухакан суйлав умӗнхи пухусем уйрӑмах пысӑк ҫӗкленӳпе иртеҫҫӗ. Либерце хулинче суйлав умӗнхи пухусенчен пӗринче Чехословакири коммунисла партин Тӗпкомӗн генеральнӑй ҫекретарӗ Готвальд йулташ тухса каланӑ. Вӑл: генлейновӗцсем шӑпланнӑ пулнӑччӗ, хальхи вӑхӑтра вӗсем пуҫӗсене ҫӗнӗрен ҫӗклерӗҫ, фашисла Германи пулӑшнипе, Чехословаки правительстви ҫине тата унӑн ҫарӗ ҫине ҫӗнӗ атакӑсем тума тӑрӑшаҫҫӗ, — тесе каланӑ. „Пӗтӗм Судет — Нимӗҫ облаҫӗ тӑрӑх,—тесе каланӑ Готвальд йулташ,—Германи ҫарӗсем килни ҫинчен ҫӗнӗрен хыпарсем ҫӳреҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра вӗсем килес куна ийунӗн 11-мӗшпе 12-мӗшне йулнӑ. Сыхӑлӑхлӑ пулӑр!". (ТАСС).

Коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсем

Аниçийă Изыкăвă

Хура та тексĕм пĕчĕк пÿрт. Çак пÿртре кĕрхи каçсенче Униççе амăшĕ хăйă çутине йăл кулакĕсен ĕçне ĕçлесе... Вăрăм çĕрсенче пĕкене пĕтĕрнĕ май, йăланах йăвар шухăша путнă.

— Хăçан ĕçсер çыннисем пек çите... пурнăçне пурăнапăр-ши?

— Хăçан тата кам пире çын вырăнне шутлĕ-ши?

Вĕçĕмсĕр кулăшăнă амăшĕ. Куç çульне питне çуса йăвăр, хуйхăлă йурăсем йурланă. Вăл хуйхăлă йурăсене те напрăвлăн та уççăн йурлама хăрана.

Çамрăк Униççе амăшĕнчен çимели ыйтнă. Анчах амăшĕн ачине çитерме те йурăхла апат пулман. Ача шывпа сыпса ыраш çăкри чăмласа çитерме. Ыраш çăкри те çителĕклĕ пулман. Кĕнчеле арласа тупнă çăкăр çăкăр пĕçерме çитмен. Çапăха йăшка çине лăкăка кăна çинĕ.

Униççе ашшĕнчен пĕр çултах... талăха йулнă. Ані амăшĕ 8 çулта çитсенех пайне патне, ... çапма йăна. Унта вăл кашни ... тăкăра 20 сехетшер ĕçленĕ. Канма вăхăт пулман. Кăнт канас тессен те, чăпта çантаракан кулак:

— Ан ларăр, ĕçлĕр, — тесе йатласнă. Ĕç укçине ытла та сахал тÿлене. Çапла Униççе 8 çул хушшинче чăпта çапнă. Мунчала тусанĕ çинче, таса мар пÿртре пачăкса ĕçленĕ.

Униççен çамрăкранах хăйне пурăнма çăкăр çăккăр тупмала пулнине, çамракла хут вĕренеймен. 19 8 çулта çеç вăл хут пĕлменнисен шкулĕнче вĕренсе тухнă. Унта тепĕр икĕ çултан хут сахал пĕлекенсен шкулне пĕтернĕ.

Аниçийă Исайĕвна Изыкăвă 1913 çулта Ишлей районĕнчи Йĕтĕрнекасси йалĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. 1932 çултанпа колхозра тарăт. Вăл 1934 çултан пуçласа 1937 çулччен колхозра писмоводçĕн пулса ĕçлене. 1937 çулта тракториска пулма вĕренсе тухнă.

Халĕ Аниçийă Исайĕвна Изыкăвă йулташ Ишлейри машина-тракторла станцинче тракториска пулса ĕçлет.

Тĕкех вăл амăшне пĕчĕк пÿртре тăрăхса пурăнни чухнехи пек хуйхăлă йурăсем йурламаст. Пысăк та йăрăнсăр уй-хирте çĕре хавасланса сухаласа, савăнăçлă йурăсем шăрантарат. Машина-тракторла станцинче паллă стахановка шутланат. Колхозла пурнăçшăн, Ленин—Сталин партийĕн чĕререн тăрса ĕçлет. Ăна партипе совет влаçĕ тÿре çул çине кăларнă. Хăйне хушнă пур ĕçе те лайăх пурнăçласа пынишĕн ăна темиçе хутчен те хаклă премисем пана.

Аниçийă Исайĕвна Изыкăва йулташа Ишлей Покровск суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Хаклăскен телейлĕ куненче — июнĕн 26-мĕшĕнче Ишлей-Покровск суйлав округĕнчи суйлавçăсем Аниçийă Исайĕвна Изыкăва йулташ кандидатуришен хавасланса сасăлаççĕ.

Ишлей-Покровск округĕнчи суйлавçăсем Изыкăва йулташ ку тăранччен тăрăшса ĕçленĕ пекех малашне те тÿррĕн ĕçлессе шанаççĕ.

Йефимийă Борисăвна Виноградăвă

Вăрнар районĕнчи „Путь Ленина" колхоз колхозникĕсем хăйсен суйлав уменхи пухăвĕсенче пурте пĕр сасăпа пулса Йермошкина йалсовет председательне Йефимийă Борисăвна Виноградăва йулташа Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Йефимийă Виноградăва 1894 çулта Вăрнар районĕнчи Алманова йалĕнче, чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Октябрьти Социализмла аслă революцичченхи вĕсен çемйинчен никĕсĕн та çĕнĕ тыра пуличчен çăкăр çитмен. Йефимийăн çамрăклăхĕ саваннăçăр иртнĕ. 1902 çулта вăл Алмановри пуçламăш шкулта вĕренме кĕнĕ, чухăн пурăннипе унăн пуçламăш шкулта та вĕренсе пĕтерме май пулман. 11 çултах çынсем патне тарă кĕрешсе кайма пулнă. Вăл нумай çулсем хушшинче пуйансем патĕнче тарçăра пурăннă. Çамрăклах пуйансен пусмăрлăхĕнче хĕнхур курнă.

Октябрьти Социализмла аслă революци çеç ăна кулаксен пусмăрĕ айĕнчен кăларнă.

1930 çулта вăл колхоза кĕнĕ. 1933 çулччен колхозри ача йасли пуçлăхĕнче ĕçленĕ.

1933 çулта ăна, тăрăшса ĕçлекен колхозница тесе, Горькинче пулса иртнĕ колхоз председательсен 4 уйахлăх курсне вĕренме йарасçĕ. Курсран килсен 1935 çулта колхозра йĕтен акса тăвас тĕлĕшпе бригадир пулса ĕçлет. Бригадирта тухăçлă йĕтĕн туса илнине кура, Йефимийăна 1936 çулта колхоз председательне суйласçĕ.

Колхоз председательне суйласан малтанхи кунсенче вăл хăйĕн пултарулăхне катартнă, колхозниксем шанса пана ĕçе тÿррĕн пурнăçланă.

1937 çултанпа вăл Йермошкина йалсовет председательне ĕçлет. Вăл йĕртсе пыракан йалсовет районра малта пыракан йалсоветсенчен пĕри шутланат.

Партии шанчăклă ывăлĕ

Михаил Федарович Терентйĕв йулташ Горький облаçĕнчи Кулебак районĕнчи Пысак Окулăва йалĕнче, 1905 çулта, ватам хресчен çемйинче çуралнă. 1916 çулта унăн ашшĕ вилнĕ. Кун хыççăн 11 çулхи Михаилăн ĕçлеме, тытăнкала лекне. Вăл 4 çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнă, малашне вĕренме май пулман. Вара 1917 çулта вăл Мордовщинскăри пăрахутсенче кĕперсем тăвакан савăта ĕçлеме кĕрет. Унта вăл закройщиксен парса тăракан, рапортист тата приймощикан помощникне пулса 1923 çулччене ĕçлет. 1919 çулта комсомола кĕнĕ.

1923 çулта ăна комсомол организацийе совпартшкула вĕренме йарат. Кунтан вĕренсе тухнă хыççăн каллех Мордовщинскăри парахутсемпе кĕперсем тăвакан савăтра подручнăй нарядчик пулса 1925 çулхи сентябрĕ уйăхĕччен ĕçлет.

1925 çулхи сентябрьтен пуçласа Мускаври рабфакра вĕренет. Рабфакран вĕренсе тухнă хыççăн Плеханов йачĕллĕ тăракан Халăх хуçалăх институтне вĕренме кĕрет. 1930 çулхи сентябр уйăхĕнче Мускаври Н. Е. Бауман йачĕллĕ тăракан механико-машиностроительнăй институтра вĕренме. Кунта вăл 1932 çулччен вĕренĕ.

1932 çулхи кĕркунне М. Ф. Терентйĕв каллех Мордовщинскăри парахутсемпе кĕперсем тăвакан савăта ĕçлеме кĕрет. Кунта вăл 1931 çулхи март уйăхĕнчен тĕрлĕ ĕçсенче ĕçлене. Савăтри техникăла пропаганда сектăрĕн начальникĕ, савăтри комитетăн председательне тата савăтра партком секретарĕ пулнă.

1932 çултан пуçласа 1935 çулхи март уйăхĕччен вăл Вăрман ĕçĕнчи тата Вăрман хутăрас ĕçри работниксен профсоюзĕн Кулебак районĕнчи рабочком председательне пулса ĕçлене. 1935 çулта, ПСК(б)П Горький крайкомĕ М. Ф. Терентйĕв йулташа партин чăваш организацийне ĕçлеме йана. 1938 çулхи февраль уйăхĕнчен вăл ПСК(б)П Çĕрпÿ райкомĕн иккĕмĕш çекретарĕ пулса ĕçленĕ. Февраль уйăхĕнчен пуçласа (1938 çул) ПСК(б)П Чăвтш Обкомĕн советпа суту-илу пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет.

Терентйĕв йулташ коммунисла партин шанчăклă ывăлĕ. Вăл Ленин—Сталин парти ĕçне, чĕререн паранса ĕçлет.

Çĕрпÿ районĕнчи Рындивари тата Иванавари колхозникĕсемпе колхозницăсем М. Ф. Терентйĕв йулташа ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Кирил Вастрÿк

Вăл 1905 çулта Шупашкар районĕнчи Апаш Туçи йалĕнчи чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Кирилăн ашшĕсем йалтан инçетри хыт çĕре сухапуçне тĕмĕн чухлĕ сухаласан та, çимелĕх тыра туса илеймен. Çавăнпа та Кирилăн пĕчĕкренех кулаксем патне кайса йăвăр ĕç ĕçлесе çăн-çурăма ватмала пулнă.

Кирилсен Октябрьти социализмла аслă революци хыççăн çеç чăн-чăн лайăх пурнăç пуçланнă.

«Кирил Куçмич Вастрÿк 1920 çулта комсомола кĕнĕ, ăна Ленинла комсомол вĕрентсе çитентерне. 1921 çулта педагогсен курсĕнче вĕренсе тухнă. 1923 çулта Ленинградри коммунисла Университетра (комсомол уйрăмĕнче) вĕренсе тухат. Вăл кунта 1924 çулта ПСК(б)П членне кĕрет.

«Вастрÿк йулташ шкултан вĕренсе тухсан, 1924 çултан 1928 çулччен комсомолри йĕртсе пырас ĕçсенче Шупашкарта тата Йĕтĕрнере ĕçлет. 1928—1932 çулсенче вăл Тăрачкав районĕнчи сухăр йухтаракан савăт директорне пулат. 1933 — 1937 çулсем хушшинче ПСК(б)П Куславкка тата Çĕмĕрле райкомĕсенче иккĕмĕш çекретар пулса ĕçлет.

Вастрÿк Ленин—Сталин партин çуйĕрĕнчен пĕр пăрăнмасăр тÿррĕн ĕçлесе пынă. Троцкисла-бухаринла-рыковла т. ыт. пур тĕрлĕ тăшмансене те хирĕç вирлĕн кĕрешнĕ, кĕрешет те.

Кирил Куçмич Вастрÿк халĕ Чăваш АССР суту-илу Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлет.

Халĕ ăна, Канаш районĕнчи Карăкла суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратна.

Мирон Андрейĕвич

Кив Майăк йалĕнчи çуртырриссене формалин шывĕпе чухĕксен колхозниксем пайан иртеннех Мирон Андрейĕв хурçа трактăр çинче ларса килессе кĕтнĕ. Вĕсем колхоз тыр сĕклачĕсем патĕнче ĕçленĕ хушăранах уй йĕнĕлле çаврăна-çаврăна пăхнă.

Мал йенчен çулпала трактăр кĕрлесе килни сасса илтсен, ачасем алăсене çупса:

— Сурах килет, Мирон!

— Хурçа трактăр!

— Трактăр! Трактăр! — тесе кăшкăрнă. Мирон Андрейĕвич 1936 çулта трактăриссен курсĕнче вĕренсе тухсан хурçа трактăрпа йала пынине халăх саванса кĕтсе илнĕ. Мирон курсран тухсан малтанхи кунсенче: епĕ çак пысăк хурçа лашапа çынсем пек ĕçлейрĕн-ши? — тесе те шутланă. Анчах вăл нумай иккĕленсе тăман:

— Мана трактăриссен курсне йарса вĕрентнишĕн сире, колхозник йулташсем, пысăк спасипă. Епĕ есĕр мана шанса пана çак хурçа лашана ĕçлеме пултарăп. Есре пĕтĕм вăйа хурса ĕçлетĕп, тесе кĕскен большевикла ответлене.

Чăн та Мирон Андрейĕв хăй калана самаха пурнăçласишĕн тăрăшнă. Вăл ăна есре катартна. 1936 çулта малтанхи çулах Елекри машинапа трактăр станцинчи трактăриссенчен мала тухакани Мирон Андрейĕв пулнă. 1937 çулта та вăл хăйĕн трактăрĕпе нормă тăрăх 550 гектар сухаламала пулнă пулсан, горючине 250 литр перекетлесе хăварса, 1236 гектар сухалана. Çак ĕçшĕн ăна 1938 çулта йалхуçалăхĕнчи тырпул масштабĕсен республикăри съездĕнче хаклă парне пана. Вăл халĕ Елекри машина-трактăрла станцинче чи примерлă стахановец шутланат.

Мирон Андрейĕвич Андрейĕв йулташ Кив Майăк йалĕнчи ватам хресчен çемйинче çуралнă. 1916 çулта çĕнĕ Майăкри пуçламăш шкула вĕренме кĕнĕ. Кунтан вăл 1920 çулта вĕренсе тухнă. Çамрăкранах вăл йалхуçалăхĕнче ĕçленĕ. 1935 çулта колхоз правленийĕ ăна трактăриссен курсне вĕренме йана. Трактăриска 1936 çулта вĕренсе тухнă. Вăл халăхшăн, халăх ш нна ĕçе тивĕçлипе туса катартнă çынă. Халăх шанăçне малашне те тÿррĕн пурнăçласа пыма пултаракан çĕршывăн паттăр та хăйула ывăлĕ.

Ăна çакна кура та Елĕк районĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Йалхуçалăхĕнчи паллă çынсенчен пĕри

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Агроном", „Хĕрлĕ Сурăм" тата Воропаев йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксем хăйсен суйлав уменхи пухăвĕсенче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Лубовь Çеменăвна Поçакова йулташа тăратрĕç. Çак кандидатурăна Хĕрлĕ Чутай суйлав округĕнче регистрацилене.

Пирĕн çĕршыв пысăк утăмсемпе малала пырат. Халĕ епĕр йалхуçалăхĕнче те калама çук пысăк çĕнтерÿсем туса пыратпăр. Йалхуçалăхĕнче çĕнĕ çынсем Ленин-Сталин парти ĕçне парăнна çынсем ÿссе пыраççĕ. Социализмла йалхуçалăхĕнчи паллă çынсенчен пĕри—Лубовь Çеменăвна Поçакова. Вăл 1916 çулта çуралнă. Ăна советла колхоз йалĕ пăхса ÿстернĕ. Поçакова йулташ пирĕн колхозсем татах та вăйлăн чечеклесе, çĕрпеллесе пычăр, вĕсем çĕршыва йалхуçалăх продукцине нумай парса тăчăр тесе тăрăшат.

Лубовь Çеменăвна ачаранах колхоз ĕçне активлăн хутшăнат. 17 çула çитсен ăна техникăла культурăсем тăвас ĕçĕн звеньевойне лартаççĕ. Вăл ку ĕçре лайăх тĕслĕхсем катартса парат.

Лубовь „Хĕрлĕ Сурăм" колхоз членне. Ку колхоз Хĕрлĕ Чутай районĕнчи малта пыракан колхозсенчен пĕри. Çак колхоза Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкине выльăх-чĕрлĕх йĕнепе хутшăнма списока кĕртнĕ. „Хĕрлĕ Сурăм" колхоз колхозникĕсем çулран çулах тырпул тухăçне ÿстерсе пыраççĕ. Вĕсен выльăх-чĕрлĕх ÿссех пырат, кунта выльăх усраман хуçалăх пĕрре те çук.

Çак колхозăн пĕтĕм çитĕнĕвĕсенче Лубовь Çеменăвна Поçакова йулташ тăрашса ĕçлене. Хăйĕн йулташĕсене лайăх ĕçлеме вĕрентсе пынă, пултарулăхĕпе хавхалантарнă, çавăнпа та ăна ĕнтĕ колхозниксем йуратаççĕ.

Лубовь Çеменăвна Поçакова иреклĕ совет хĕрарăмĕсенчен пĕри. Вăл çĕршыври алла-аллăн социализм строительствинче хутшăнса ĕçлет, государствăна йĕртсе пырас ĕçре хутшăнса ĕçлет.

Иван Йĕвдокимăвич

Иван Йĕвдокимăвич Йĕвдокимăв йулташ 1902 çулта Çĕрпÿ районĕнчи Патăрйелĕнче, чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Вăл пуçламĕш шкулта вĕренсе тухнă. 1918 çултан пуçласа 1920 çулччен хăйсен йалĕнче кĕтÿ пăхнă. 1924 çултан 1926 çулччен Хĕрлĕ Çарта пулнă. 1928 çулччен вăл каллех хăйсен йалĕнче кĕтÿ пăхнă.

1930 çулта йалта колхоз организациленсе. Колхоз организацилесĕçре Иван Йĕвдокимăв йулташ пысăк вăй хунă. Клас тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсене хирĕç кĕрешнĕ. Йединоличниксене колхоза кĕрессишĕн тăрăшса колхозри пурнăç çинчен ăнлантарнă. Колхоза организацилесе хуçалăх йĕнчен тĕреклетессишĕн тăрăшнă.

Колхоза тĕреклетес, колхозниксене пуйан та культурлă пурнăçкан тăвас тĕлĕшпе чĕререн тăрăшса ĕçленине кура, колхозниксем Иван Йĕвдокимăвича колхоз организацилесенех уйхир бригадирне суйлаççĕ. Уйхир бригадирĕнче 1933 çулччен ĕçлет. 1933 çултан пайанхи кунччен вăл колхозри сысна фермин пуçлăхĕ. Çак выльăх-вăл Патăрйел йалсоветĕн выльăх-чĕрлĕх çекцине ĕçлесе, выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса пырат. 1933 çултанпа Иван Йĕвдокимăв йулташ тăварла фермăри сыснасен ăратне лайăхлатас йĕнĕпе пахаклă ĕçсем туна. Халĕ фермăра пĕтĕмпех „Английская белая" тĕк ăратлă сыснасем. Вĕсенчен сысна амăшне районри ăратлă выльăхсен кĕнеки çине çырна. Фермăра сысна ĕрчетмелли государство плане тултарнă. Фермăра 3 сысна амăшне пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче тăратма йалла тухнă.

Йĕвдокимăв йулташ халăх хушшинче пысăк авторитетла çын. Ăна колхозниксем йуратаççĕ. Общественно-политикăлă ĕçсенче йăланах активлă ĕçлет. Хăйĕн политикăлă пĕлÿлĕхне ÿстерсех пырат. Вăл социализм ĕçне, колхоз пурнăçа чĕререн йуратат. Партипе правительствă хушнă ĕçсене чыслă пурнăçласа пырат.

Халĕ Иван Йĕвдокимăвич йулташа Уйкас суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă. Округри суйлав комиссийĕ ăна çак Уйкас суйлав округĕнчен Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрацилене.

Трак районĕнчи ĕççыннисен кандидачĕ

Йĕвдокийă Дмитрийĕвна 1902 çулта Шупашкар районĕнчи Платка йалĕнче, хресчен çемйинче çуралнă. Вăл Совет влаçĕ пулсан çеç хут пĕлекен пулса обществăлла ĕçсенче активлă ĕçлеме пуçлана. 1920—1929 çулсем хушшинче делегатка пулса ĕçлене.

1929 çултан 1930 çулччен хĕрарăм-делегаткăсен пухăвĕсене йĕртсе пынă. Çак вăхăтрах йалсовет председательн заместителĕ пулнă. 1930 çултан 1932 çулччен Икккасси йалĕнчи ачасен сачĕн пуçлăхĕ пулнă.

1932 çулти май уйăхĕнчен 1934 çулти март уйăхĕччен ПСК(б)П Шупашкар райкомĕн хĕрарăмсен пайĕн пуçлăхĕнче, çак çултах март уйăхĕнчен сентябр уйăхĕччен „Хĕрлĕ йалăв" колхоз председательн заместителĕ, тата ПСК(б)П кандидатĕсен группине йĕртсе пыраканĕ пулса ĕçлет.

Йĕвдокийă Дмитрийĕвна 1931 çултанпа ПСК(б)Парти членĕ.

Дмитрийĕва йулташ обществăлла ĕçсенче пысĕксе çÿсне. Вăл массă çине ĕçлеме, хуçалăхла-политикăлă кампанисенче массăна йĕртсе пыма пĕлнине хăйĕн ĕçĕнче катартнă. Дмитрийĕва йулташ йалăнах хăйĕн пĕлÿлĕхне ÿстерессишĕн тăрăшат. Вăл 1932—1937 çулсенче Шупашкарти коммунисла йалхуçалăх шкулĕнче вĕренне.

1937 çулти июнь уйăхĕнчен 1938 çулхи йанвар уйăхĕччен Дмитрийĕва йулташ Тракри машина-трактăрла станцин директăр заместителĕ пулат. Халĕ вăхăтра вăл ПСК(б)П Трак райкомĕн инструкторĕ пулса ĕçлет.

Халĕ Трак районĕнчи Супар суйлав округĕнчи суйлавçăсем Йĕвдокийă Дмитрийĕвна Дмитрийĕва йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Супар суйлав округĕнчи суйлавçăсем Дмитрийĕва йулташ малашне те Ленин-Сталин партийĕн чĕререн тăрăшса ĕçлессе шанаççĕ.

Кандидатсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен

ЙĔТĔРНЕ. Хучаш суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Петр Степанăвич Полтĕв йулташ кандидатурине, РСФСР Верховнăй Советне Çĕмĕрле суйлав округĕнчен депутата суйлама Алексей Афанасйĕвич Малинин йулташ кандидатурине тăратнă. Халĕ Хучаш йалĕнчи комсомолецагитаторсем суйлавçăсене аслă пухусенче, колхозниксем ĕçленĕ чухне, канна вăхăтсене, касçхине урамсенче пухăнса ларна çĕрте Верховнăй Совçтсене депутата суйлама тăратна кандидатсем çинчен ăнлантараççĕ. Суйлавçăсем пурте, июнĕн 26-мĕшĕнче Верховнăй Советсене депутата суйлама хамăр тăратнă Малинин тата Полтĕв йулташсен кандидатурисемшĕн сасăлама пулаççĕ. **В. Çвешников.**

М. С. Кĕçаçĕв йулташ агитаторсем патĕнче

Июнĕн 3-мĕшĕнче Йункă округĕнчи суйлав участокĕнчи агитаторсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлăва усна хыççăн, райком секретарĕ Бирюков йулташ агитаторсен халăхи задачисем тата кандидатсем çинчен суйлавçăсем хушшинче агитацилесси çинчен каласа парат.

— Ун хыççăн АССР Верховнăй Советне суйлама кандидата тăратнă М. С. Кĕçаçĕв йулташ туха калать:

— Йулташсем! Мана ĕлĕк Çемка Михали тетчĕç. Çава Çемка Михали мĕн чухлĕ хĕн-хур курманни пуле вăл, — тет Михаил Семенавич. Малала Михаил Семенавич хăй вăрçăра, Çĕнĕрте нуша курса ÿснине çинчен каласа пачĕ.

— Халь есĕр пана шанăç — ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратни — манăн пит те пысăк чыс. Çак чысшăн епĕ чи малтан Сталин йулташа тата çине тăрсан ... (тăвалла) ... ăла суйаççĕ.

Ун хыççăн агитаторсем туха калаçрĕç. Громав йулташ калаçăрĕ:

— Епĕ Кĕçаçĕв йулташа 1923 çултанпа пĕлетĕп. Вăл колхоз организацилессине ĕçлерĕ. Вăл практикăла ĕçре тĕреслесе, партийне кĕме пулашрĕ. Ĕçре вăл маттур та тивĕçлĕ. Вăл чăн-чăн большевик. Епĕ уншăн сасса парса, хамăр колхозри суйлавçăсене те Кĕçаçĕв йулташ кандидатурине çинчен ăнлантарса, пурнăçĕпе тĕплĕн паллаштарăп.

Йункари Войкав йалĕнче тăракан колхозри агитатăр Филиппăв йулташ ытти агитаторсене хăйĕн ĕçĕсемпе паллаштарчĕ.

Агитаторсем округри пур суйлавçăсене те Михаил Семенăвич Кĕçаçĕв кандидатури çинчен ăнлантарса пама пулчĕç.

Прок. Иаркункин.

Борис Илларионăвич Йĕниçейĕв

Чухăн çемйе. Çиме çăкăр çук. Çапах та пурнăç пулат, çиме çăкăр тупас пулат. Шăтăк-çуркăла хура пÿртре Борисăн ашшĕпе амăшĕ ыранхи кун йĕпле пурăнассишĕн хуйхăрна. Çамрăк Борис — 7 çулхи ача ăс патне çыпăçайман-ха, çăкăр ытма çеç пĕлнĕ.

— Борис ĕнтĕ кĕтĕве кайма пултарат, — шутлана ашшĕне амăшĕ. Çапла вара, 7 çулхи Борис вăрăм пуша çакса кĕтÿ хыççăн çÿреме тытăнат.

— Аннĕ, манăн йулташсем шкула кайаççĕ, манăн та вĕсемпе шкула çÿрес килет, — амăшĕ куççульпе ыйтса макăрна Борис. Анчах амăшĕ ăна йĕпатмалăн, самах туса калаймĕн, Борисăна пĕрлех макăрна.

1906 çулта Борис ашшĕсем чармăнне пăхмасăрах йалти, пуçламăш шкула вĕренме кайма тытăнат. Ун пухăнче вăл 12 çулта пулнă.

1910 çулта йалти шкултан вĕренсе тухат. Йалти шкултан вĕренсе тухсан Борисăн татах вĕренме кайассăн килнĕ. Пуçламăш шкултан вĕренсе тухсан çулах Ишекри икĕ класла шкула вĕренме кĕрет. Анчах нушапа, çитмен пурнăç Борисăн ĕмĕтне татăт, Ишекре пĕр çул кĕрентсен, Борисăн шкул саккинчен уйăрласа, каллех кĕтÿ хыççăн çÿремеле пулнă.

* * *

1917 çул. Борис — хĕрлĕ салтак. Тăвăт çул хушши граждан вăрçин тĕрлĕ фрончĕсенче çĕхăлăх ирекĕшĕн çапăçат вăл. 1918 çулта, фронтрах ПСК(б)Парти членне кĕрет.

1921 çул. Борисăн киле таврăнмала. Улта çул вăл Йарапайкассинче (Ишлей р.) — çурална йалта пурнăç. Çапах та вăл Мускава çар шкулне вĕренме йулат. Çар шкулне икĕ çул вĕренне хыççăн, Борис çĕрĕ командир пулат. 1922—1926 çулсенче батальон командирĕ пулса ĕçлет. Ака ĕнтĕ халь вĕрен, ĕçле, пурăн.

Борис умĕнче иреклĕ те телейлĕ пурнăç çулĕ уçăлнă.

* * *

1927 çулта Борис Илларионăвича Йĕтĕрне районне уголовнăй розыск начальникне пулса ĕçлеме йараççĕ. Унтан, 1928 çулта, ăна Елĕк райĕставком председательне суйлаççĕ.

Райĕставком председательне икĕ çула йахан ĕçленĕ хыççăн, Борис Илларионăвича Çĕнтерварринчи çĕрйĕркелÿ техникумне вĕренме йараççĕ. Унтан вĕренсе тухсан, 1930 çулта, Воронежри зоотехникăла институтне вĕренме кĕрет. Ку шкултан та анçланах вĕренсе тухат. 1934—1936 çулсенче Борис Илларионăвич—Чăваш АССР Çĕрес Халăх Комиссарачĕн аслă зоотехникĕ.

1936 çултанпа Шăхасанти машина-трактăрла станцин директорĕ пулса ĕçлет.

Борис халĕ телейлĕ те иреклĕ пурнăç çулĕ çинче çирĕппĕн тăрат.

* * *

Халь хĕрлĕ ĕç вăхăчĕ. Борис Илларионăвича кабинетра ларнине курăймăн. Вăл ĕçре. Мастерскова кайат, хире — трактăр бригадисен ĕçлене çĕре кайат — тĕрĕслет, пулăшат. Трактăриссем йуратаççĕ ăна, час-часах пулăшу ыйтаççĕ унтан. Директăр вĕсене йалăнах пулăшат, ĕçре хавхалантарат.

Ахалтен мар Шăхасанти МТС работникĕсем, „Канаш", „Победа" тата Ленин йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксем суйлав уменхи пухăвĕсенче Борис Илларионăвич Йĕниçейĕв йулташа Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç. Пысăк хисеп, пысăк чыс — саккунлă тивĕç.

Ал. Соловйов.

Округри агитаци ĕçĕ

Елĕк суйлав округĕнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленесси, агитаципе пропагандă тивĕçлĕ вырăнта тăмаст-ха.

Агитаци ĕçĕ уйрăмăнах Шураç суйлав участкинче çителĕксĕр пулса пырат. Кунта йединоличниксем хушшинче суйлав техникине ăнлантарса парас тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ.

Хăшпĕр суйлав участкисенче суйлавçăсен спискисене тĕрĕс туман. Йархуньушкĕн тата Шарыпкă йалсовечĕсенче спискăсене таса çырман, йатсене арпаштарнă.

Елĕк суйлав округĕнче лайăх ĕçлесе пыракан суйлав участкисем çук мар. Кунта уйрăмăнах Тукташ суйлав участкине палартмала. Участкăна кĕрекен йалсенче агитаципе пропагандă ĕçне анлăн сарнă. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама округсем тăрăх регистрациленĕ кандидатурăсем çинчен ĕçсыннисене тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Ку ĕçре уйрăмăнах М. Григорйĕв агитатăр тăрăшса ĕçлет. Вăл суйлавçăсене суйлав техникине те, депутата суйлама регистрациленĕ кандидатурăсем çинчен те ăнлантарса парат.

Ф. Филиппăв.

Участкăра

ÇĔМĔРЛЕ. (Телефон тăрăх). ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Хутар суйлав округне кĕрекен Хутар участкинче суйлав агитацийĕ хĕрÿлĕн сарăлса пырат. Суйлав участкинче пурĕ 855 суйлавçă, вĕсене пурне те суйлав Положенисемпе Конституцисене вĕренме хутшăнтарнă.

Халĕ колхозниксем вăрманта тата ытти çĕрте те ĕçлеççĕ. Агитатăрсемпе доверенăйсем вĕсем патĕнче те агитаци ĕçне тăваççĕ. Хутар суйлав участкинчи доверен нăй Й. Николайĕв йулташ вăрманта ĕçлекен колхозниксем патне çÿрет. Вăл йулашки вăхăтра кунти суйлав округе тăрăх ЧАССР Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата регистрациленĕ Шишкин йулташ çинчен каласа пама, унăн биографийĕпе суйлавçăсене паллаштарма тытăннă.

М. Митрофанăв.

Суйлав кунне савăнăçлăн иртеретпĕр

Наратчаккинчи (Сĕнтĕрвăрри р.). колхоз çамрăкĕсем суйлав кунне—ийунĕн 26-мĕшне савăнăçлăн иртерме хатĕрленеççĕ Ку тĕлĕшпе çамрăксен пухăвĕ иртрĕ. Пуху ийунĕн 26-мĕшĕнче „Сутра", „Илта", „Ывăлĕ" йатлă пйесăсене лартма йышăнчĕ. Халĕ колхозри драмкружок пйесăсене лартма, хор кружокĕ тĕрлĕрен çĕнĕ йурăсем йурлама вĕренме тытăнчĕ.

В. Закамский.

„Манал" аласта ертелĕ хĕрлĕ йалав илчĕ

ИШЛЕЙ. Манальти чăпта çапакан аласта ертелĕ çултан çул аван ĕçлесе пырат. 1937 çулхи производство планне 104 процент тултарнă пулсан, кăçалхи плана ийунĕн пĕррĕмĕш тĕлне 57 процент таран пурнăçларĕ. Иртнĕ пилĕк уйăхра ертел 98.100 тенкĕлĕх продукци парса, республикăра малти вырăна тухрĕ.

Продукци пахалăхĕ йенĕпе те ертел малти ретре тăрат. Мĕн пур продукцинчен 2-мĕш сурт 5,4 процент кăна йышăнат.

Ертеле культмассăлă ĕçе лайăх организациленĕ. Культработник Кузнецов хăйĕн ĕçне йуратса туса пырат. Ертел председателĕ Толстов Кузнецова кулленех пулăшу парат.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе ертеле 11 кружок, 7 агитатăр ĕçлеççĕ. Суйлав положенисене вĕренес ĕçе ертелĕн членĕсене пурне те йавăçтарнă.

Ертел çумĕнче ытти кружоксем те пур. Членсен политпĕлĕвне хăпартас тĕлĕшпе 2 политкружок ĕçлет. Драмкружокпа хор кружокĕ тăташах ертел членĕсен пултарулăх вечĕрĕсене иртереççĕ.

Майăн 15—17-мĕш кунĕсенче пулса иртнĕ Чăвашкульпромсоюзăн IV пленумĕ республикăри куçса çÿрекен хĕрлĕ йалава „Манал" аласта ертелне пама йышăнчĕ. Ийунĕн 2-мĕшĕнче культпромсоюз президиумĕ вырăна пырса ертел йалава ертел аллине пачĕ.

Йалав илни ертел членĕсене савăнтарат. Вĕсем кăçалхи производство планне 150 процент таран кайа мар тултаратпăр, йалава алăран вĕçертместпĕр, тесе сăмах пачĕç.

Н. М. Йашков.

Тырпулсене çумкурăксенчен тасатаççĕ

* * Мăн Йĕкĕтри (Йĕтĕрне р.) „Хĕрлĕ Октабĕр" колхоз членĕсем уйри калчасене çумкурăксенчен таса тытса тăраççĕ. Ку вăхăтчен çуртри калчисене 21 гектар çинче çумкурăксенчен тасатнă. Çумкурăксене çумлас тĕлĕшпе кашни бригадăра пĕрер звено ĕçлет.

Т. Йăрандайкин.

* * Ишекри (Ишлей р.) Сталин йачĕпе тăракан колхозри кашни бригадăра çумкурăксене çумлама 6—7 çынтан звеносем тунă. Вĕсем çĕлĕ, тулă, парçа йышши культурăсен уйĕсене çумкурăксенчен тасатаççĕ. Çавăн пекех пахча-çимĕçсем çинчи çумкурăксене те пĕр хутчен çумлавă.

М. Овчинникăва, И. Васильева колхозницăсем çум çумлас ĕçре стахановла ĕçлеççĕ.

А. Наумăв.

Çумкурăксемпе кĕрешесси—пайанхи ĕç

Пирĕн республикăри колхозсем çуракине кĕске срукра, пысăк пахалăхпа ирттерчĕç. Виçĕ республикăн ăмăртăвĕнче малти вырăна тухассишĕн социалисла ăмăртăва тивĕçлипе пуçарса пычĕç. Çуртри калчисем лайăх, пĕр харăс шăтса йĕшерĕççĕ. Симĕс те лайăх йĕшерекен калчасем, кăçал вăйлă тырпул пуласса шантараççĕ.

Вăйлă тырпул туса илес кĕрешÿ çуракине пысăк пахалăхпа ирттернипе пĕтмест. Халь колхозсен умĕнче тата пысăкрах, ответлăрах задачăсем тăраççĕ. Калчасене иккĕмĕш хут апат парасси, çумкурăксене çумласах тăрас,—пайан тумали ĕçсем пулса тăраççĕ.

Иртнĕ кунсенче çăмăрсем çунипе калчасемпе пĕрле çумкурăксем те вăйлăн хунама пуçларĕç. Вĕсем çĕрти тырпулсене ситĕнме кирлĕ апаласене хăйсем туртса илсе çитереççĕ. Çавăнпа та колхозсен тухăçа пек çумкурăксене çумласах тăмалла, калчасене таса тытмала.

Уйрăм колхозсем çумкурăксемпе çине тăрсах кĕрешеççĕ. Какшăри (Вăрнар р.) „Ĕç йалавĕ" колхоза кĕрхи тулă 15 гектар, клеври 40 гектар çумкурăксенчен тасатнă. Аслă Чакри (Вăрмар р.) Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоза çумкурăксене çумлама йатарласа 18 звено организациленĕ. Çак звеносем çуртри калчисене пĕтĕмпех пĕр хутчен çумкурăксенчен тасатса тухнă. Звеносем çумкурăксем тухнине сăнасах тăраççĕ. Вăрмар районĕнчи „Хĕрлĕ Шăптах" колхоза та 25 гектар кĕрхи тулă çинчи çумкурăксене çумланă. Халь çуртри калчисем çине тухнă çумкурăксене çумлаççĕ. Йуманайĕнчи (Йĕтĕрне р.) „Большевик" колхоз членĕсем 37 гектар çинче çумланă.

Çав хушăрах çумкурăксемпе пачах кĕрешме тытăнман колхозсем те чылай-ха. Çакна йалкорсен сывăресем лайăх кăтартса параççĕ. Мартынкассинчи (Трак р.) „Хĕрлĕ хевелтухăç" колхозăн калчисене çумкурăксем пусса илнĕ пулсан та, вĕсене çумлама пуçăнман. Çав нашкалах Ихра Сырминчи (Вăрмар р.) „Делегатка" колхозра та çумкурăксемпе кĕрешмеççĕ. Çак колхозсен руководителĕсем ку вăхăтчене тырпулсене çумкурăксенчен таса тытни тырпул тухăçлăхне чылай ÿстернине анланса илмен пулас.

Чылай çĕрĕç работникĕсем те çум çумлас ĕçе хакламаççĕ, чăннипе, вăл ĕçе йĕртсе пымаççĕ. Вăрмар, Йĕпреç, Çĕрпÿ, Трак, Тăвай районĕсенче çум çумлас ĕç „пачах пуçланман тесен те пĕрĕ парат.

Вăрмар районĕнче сийенлĕ шухăш сарăлнă.—„Калчасем вăйлă пирки, вĕсене çумламасан та йурат,"—теççĕ. Паллах, çакăн пек сийенлĕ шухăша çапса хуçас пулат. Çумкурăксене çумлас ĕçе халат тытăнса, туса пымалла.

Çум çумлассин анаçлăхĕ ĕçе тĕрĕс организацилениинчен те нумай килет. Ку тĕлĕшпе Йĕпреç районĕнчи „Çĕнтерÿ" колхоза палартса хăвармалла. Ку колхозра çум çумлас тĕлĕшпе звеносем туса, вĕсен çумне уйрăм участăксем çирĕплетсе панă. Вĕсем çав участăксемшĕн ответлă пулса тăраççĕ.

Суртлă участăксене çумлассине уйрăмăнах тимлĕн туса пымала. Вĕсене йалăнах пит таса тытса тăни кирлĕ.

Çĕрĕç работникĕсен, вырăнти совет, парти организацисен уйрăм çум çумлас ĕçе организацилесе, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче социалисла ăмăртăва вăйлатса пымала. Социалисла ăмăртăва уйхирте çумкурăксемшĕн вырăн пулмала мар.

Пĕр хутчен çумларĕç

* * Çĕрпÿ районĕнчи колхозсем тырпулсем çине тухнă çумкурăксене çумласах тăраççĕ. „Çĕнĕ пурнăç" колхоза çуртри калчисене пĕр хутчен çумласа тухнă. Çум çумлас ĕçре пĕрремĕш иккĕмĕш бригадă ăмăртаççĕ. Пĕрремĕш бригадăра Васильева, Иванова, иккĕмĕш бригадăра Гаврилăва, Клементьева колхозницăсем норма кулленех ытлашшипе тултарса пыраççĕ.

А. Иванов.

ИСПАНИРЕ

Республикă çарĕсен комиссарĕсем

Испани компартийĕ регулярла халăх çарне организацилессишĕн мĕнле кĕрşни пуриншĕн те паллă. Çирĕп дисциплинăлă çар тăвас ыйтăва тапратнипе пĕрлех, компарти çарта политикăлă ĕçсене йĕркелесе йарас лозунг кăларса тăратрĕ, вăл ăна пурнăçласа пырат те. Компарти малти позицисенче çапăçакан чăссене лайăх та çирĕп шухăшлă коммунисене йачĕ. Вĕсене чи малтанхи вăхăтсенче политикăлă делегатсем тесе чĕннĕ. Вăрçăн пуçламĕш тапхăрĕнче çарти политикăлă ĕçсен опычĕ пулман. Компарти ССР Союзĕнчи Хĕрлĕ Çар комиссарĕсен граждан вăрçи вăхăтĕнчи опычĕсемпе уса курнă. Ку тĕлĕшпе „Чапайĕв" тата „Мы из Кронштадта" совет фильмĕсем компартине уйрăмăнах пысăк пулăшу панă.

„Мы из Кронштадта" йатлă чаплăран чаплă совет филмĕ пирĕн бойецсен кĕрешĕвĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрат,—тесе çырат Пассионари хăйĕн „Комиссары" йатлă статйинче,—вăл фильм политикăлă комиссар мĕнле ĕçлемелине, вăл кам пулмалине уççăн кăтартса панă"...

„Бойецсен паттăрлăхне, хавасланма хапартма кирлĕ çĕре пур çĕре те,—çырат Пассионари,—хăйĕн партине çуламлăн йуратакан, ăна чĕререн паракан комиссар коммунистсем пынă. Вĕсем „Мы из Кронштадта" фильмри паттăр комиссарăн чаплăран чаплă пахалăхĕсемпе ĕçлеççĕ, вăл вĕсемшĕн чăн-чăн образец пулса тăрат. Вĕсем çапăçма пĕлеççĕ тата кирлĕ чухне вилме те пĕлеççĕ".

Компартипе пĕрлех фашисăма хирĕçле ытти партисемпе организацисем те хăйсен речĕсенчен çар чаçĕсене комиссарсем уйăрса йачĕ. Социалисла çамрăксен пĕрлешÿлĕ союзĕ коммунисла партин традицийĕсене пуринчен малтан йышăннă.

Фашиссен снарйачĕсемпе пульисем бойецсем хушшинчен комиссарсен кадăрне чылай туртса илчĕç, пуринчен ытларах коммунистсемпе социалисла çамрăксен пĕрлешÿлĕ союзĕн членĕсене пĕтерне. Теруелшĕн пынă çапăçура паттăрсен вилĕмĕпе 6 комиссар вилнĕ, нумайĕшĕ аманнă, вăл шутрах корпус комиссарĕ Делахе.

1937 çулти çуркунне Мадрид патĕнчи çапăçусен пĕр участкинче Дийегес комиссар пулса ĕçленĕ чухшĕн питĕ йавăр та хăрушă вăхăт килсе тухнă. Интервентсем атакăна куçнă. Çав вăхăтра палла тата кирлĕ позицисене çухатма пултарнă, Дийегес комиссар, „Мы из Кронштадта" фильмри комиссар пек пулса, траншейăран сиксе тухса, „Интернационал" кĕввине йурласа малалла ыткăннă. Бойецсем, унăн паттăр та хăйулă примĕрĕпе хавхаланнă аскерсем, контратакăна куçнă. Дийегес çавăн чух вилсе выртнă. Анчах ку тытăçура республиканĕцсем çĕнтерне.

Вильйануева дель Пардильйо районĕнчи çапăçусенчен пĕринче танк чаçĕн комиссарĕ, çапăçура икĕ тĕлтен аманнă аскер, йунланса пĕтнĕ аскер, малти танк çине ларса, ăна тăшман çинеле илсе пынă. Комиссарăн çак калама çук паттăр ĕçĕ бойецсене пысăккăн шухăшлаттарнă. Батальйон, танксем хыççăн пырса, атакăна куçна. Тăшмана сирсе пăрахна. Аманнă комиссар сураненчен чылай вăхăт хушшĕ йун кайнипе айран тухнă. Часах çитсе ĕлкĕрнĕ медицина пулăшăвĕ те ăна вилĕмрен çăлса хăварайман. Çапла вăл бойецсен куç умĕнче вилсе кайнă.

Батальйон комиссарĕ Рафаел Томас Гарабагас сарчĕ çине атакă тунă чухне вилнĕ. Çапăçура вăл малта пынă, пĕтĕм батальйонĕпе илсен фашиссен пульинчен чи малтан вăл вилсе выртнă. Унăн вилĕмĕ бойецсен ретне хавшатман, вăй ăрçатман „Хамăр комиссаршăн тивĕçлипе тавăратпăр" тесе кăшкăрнă, вĕсем тăшман çинеле хытăн тапăннă, комиссара вĕлерекен фашиссене вĕсем чăнипех те тавăрнă.

Брунете районĕнчи атакă вăхăтĕнче интернациональнăй бригадăн комиссарĕ Парович танк çинче пулнă. Республиканĕцсен наступленине хирĕç фашиссем пит хытă тана. Парович танк ăшĕнчен чупса тухса „малала" тесе кăшкăрнă та, хăй бойецсен пуçĕнче тăрса атакăна ыткăннă. Çакăнта вăл аманнă пулнă.

Компарти кĕске срукрах комиссарсенчен çарти пысăк политикăлă руководителсене çитĕнтерчĕ. Тĕп фронтри çарсен вăй-хăватне çирĕплетес ĕçре тĕп фронтăн комиссарĕ—халĕ Н-ски корпус комиссарĕ пулса ĕçлекен Франсиско Антон пысăк вырăн йышăннă. Тĕп фронтăн халӑхи комиссарĕ Испани компартин палла дейателĕсенчен пĕринĕ, Тĕпком Политбюро членĕ—Хесус Ернандес. Унăн ĕçĕсен çимĕçĕсем çак йулашки вăхăтсенчи операцисенче курăнмалах палăрчĕç.

Чаплăран чаплă комиссар Карлос Контрерас, хăй вăхăтĕнче 5-ш полкри политикăла ĕçсене йĕртсе пынăскер, вăрçă пуçланнă вăхăтранпа пысăк масштаблă политикăла-çар ĕç работникĕ таранах ÿсрĕ.

Республикă çарĕсем ÿсĕ тата çирĕпленсе пынипе пĕрлех комиссарсен авторитечĕ те ÿсет тата вĕсен ĕçĕсем те нумайланаççĕ. Вĕсем халĕ культурăла-политикăла ĕçе пысăккăн туса пыраççĕ. Пур чаçсенче те вĕсем тăрăшнипе клубсем, читальнăсем организациленĕ, стена хаçачĕсене каларассине йĕркеленĕ, хутпĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе кружоксем ĕçлеççĕ. Комиссарсем тăшман чаçĕсенче агитацийле ĕçсем тăваççĕ. Ку ĕçе уйрăмăнах Мадрид фронтĕнче лайăх йĕркеленĕ Ăна çакăнтан та курма пулат: тăшмансен позицийĕсем çине 30 мĕлйун листовкă ытларах пăрахнă.

Фашиссем республиканĕцсен радио саракан станцийĕсенчен мĕн тери хăрани çакăнтан паллă: Каса де Кампо районĕнче республиканĕцсен громкоговорителне пĕтерес шутпа нумай пин снаряд пăрахнă. Анчах радиона ăста пытарнă пирки тăшман ăна нимĕнле майпа та пĕтерме пултарайман.

Арагони фронтĕнчи йулашки операцисенче комиссарсем ните палла вырăн йышăннă. Интервентсем республиканĕцсен фронтне татса пăрахса республикă çарĕсене сапалантарса хурас шут тытнă. Кунашкал хăватлă хирĕçнине фашиссем халиччен курман пулнă. Çакăнта комиссарсен чăн-чăн тава тивĕçлĕхĕ пысăк. Вĕсем тавăттан: Луис Сориа, Лукас Нуньйо, Хосе Медина, Корис Гарсиа,—„Френте Рохо" хаçат çырнă тăрăх,—вĕсем çав тери тĕлĕнмеле результатсем тунă. Вĕсен чаçĕсем катартулă çапăçаççĕ.

Халĕ ĕнтĕ комиссарсем ĕçре пысăк опыт пухрĕç. Радиопередачăсем, хаçат вуланисем, калаçусем, кружоксен ĕçĕсем, художествăлă харпăрхай пултарулăхĕ çаксемпе пуринпе те çара, паттăрла, ăнлануллă дисциплинăна тата ытларах çирĕплетес тĕлĕшпе уса кураççĕ.

Республикă çарĕсен фашиссен тылĕнче йулнă паттăр дивизийĕ пĕтĕм ĕççыннисене хавасландарат: Ку дивизире комиссар Максим Грасиа вăйлăн тăрăшнипе кашни кун туха тăракан хаçат организациленĕ.

Республиканĕцсем тытса илнĕ фашисла штабĕнчи документсем хушшинче фашиссен 3-мĕш корпус командуйушчийĕн çекретлă приказне тупнă, унта фашиссем комиссарсен ĕçĕсенчен хăраса сехрене ÿкнине кăтартнă:

„Комиссарсен ĕçĕсенчен пулса пыракан хăрушлăха шута илмеле,—тенĕ приказра,—вĕсем „хĕрлисен" речĕсене çирĕплетеççĕ, фашиссен çар вăйĕсене начарлатаççĕ"...

„Политикăлă комиссарсен ĕçĕсем кунран-кун хăрушăрах пулса пыраççĕ", тенĕ малала çав приказра.

Хальхи вăхăтра Барçелонăра иатарласа шкул уçнă. Унта политикăла пысăк работниксем тата çар специалисĕсем йĕртсе пынипе паттăр çапăçура пиçсе тухнă, политикă йенчен чи шанчăклă, çирĕп бойецсем вĕренеççĕ. Комиссарсен ретне çĕнĕ кадрсем хутшăнаççĕ, вĕсем фашисла интервентсене пĕтĕмпех, тĕпĕ йĕрĕпех çĕнтересси шĕн татăклăн çапăçма пултаракан кадрсем пулаççĕ.

Б. Борисăв.

В. Г. Белинский

(Вилнĕренпе 90 çул тултарнă тĕле)

Вырăссен аслă критикĕ Виссарион Григорйĕвич Белинский 1811 çулхи ийунĕн 13-мĕш кунĕнче, Свеаборг хулинче, флотра ĕçлекен леккĕрĕн çемйинче çуралнă.

Белинский 1821 çулта Чембарти уйес училищине вĕренме вырнаçат. Унта вăл нумайах та вĕренмест, часах Пензăри гимназине куçат. Ăна вĕренсе пĕтерне хыççăн, 1829 çулта вăл Мускав университетне вĕренме кĕрет.

Университетра вĕреннĕ вăхăтра Белинский обшчĕствăн ун чухнехи чи лайăх дейателĕсемпе—Çамахрав, Станкевичпа, Петрашевскипе йулташланат. Петрашевский йертсе пыракан кружокра вăл ун чухнехи малта пыракан философипе паллашат.

Белинскине университета вĕренсе пĕтерме май пулман. Вăл 1832 çулта, помешчиксен аллинче пурăнакан хресченсен йăвăр пурнăçне тата помешчиксен сĕмсĕрлĕхне уççăн кăтартса, „Дмитрий Калинин" йатлă драмă çырнă. Ку драмă университетри пуçлăхсене паллă пулнă. Çав драмăшăн ăна университетран кăларса йараççĕ.

Ку вăхăтра Белинскин пурнăçĕ укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен питĕ йапăх пулнă. Вăл Мускаври „Молва" тата „Телескоп" журналсенче сайра хут тупăнакан литературăлă ĕçсем туса тăранкаланă. Çавăн пек ĕçлесех ĕнтĕ пулас паллă критик хăйĕн пархатарлă пултарулăхне часах палăртма пултарнă. 1834 çулта, вырăс литературине пăхса туха, „Литературные мечтания" йатлă паха статйа çырни унăн чапне тата та ÿстернĕ. Вырăссен аслă поечĕ Пушкин 1836 çулта „Современник" журнала кăларса тăма тытăнна, вăл хăйĕн журналĕнче ĕçлеме Белинскине те йавăçтарасшăн пулнă. Анчах Пушкин вăхăтсăр вилсе кайнă пирки, ун чухнехи икĕ аслă çын пĕрлешсе ĕçлесси пурнăçа кĕреймен.

Литературăра чапа тухни Белинскине нушалă пурнăçран хăтарман. Вăл, халичченхи пекех, таранса пурăнма пĕр укçа-тенкĕ тупассишĕн кунĕн çĕрĕн ĕçленĕ, издателсем çак пултарулă çынна тĕрлĕ майпа експлоатацилесе пурăннă. Вăл çапла тĕрмешсе пурăнна хыççăн ÿпке чирĕпе асапланма пуçлат. Талантлă ÿсе çитнĕ вăхăтра Белинский вилсе кайат. Пушкина пытарнă хыççăн, 11 çултан, Российа тепĕр аслă çынна—Белинскине пытарнă. Вăл 1849 çулхи ийунь уйăхĕнче вилнĕ.

Белинский политикăла реакци урнă вăхăтра, Микулай патшан цензури тунă йывăр условисенче ĕçленĕ. Полици йаланах сăнаса тăнă, кăшт май пулсанах, хурчка чăхха çĕклесе кайнă пек, тытса кайма хатĕр пулнă. Ăна вилĕм çеç патша тĕрминчен хăтарнă. Белинскине вăл йулашки сывлăшне кăларса йанă вăхăтра жандармсем арĕслеме пынă пулнă.

Белинскин пĕтĕм пурнăçĕ—етемлĕхшĕн тăрăшса кĕрешни. Вăл, литература критикĕ пулса, художествăлă сăнлăхсем çинчен каласа ăнлантарнипе пĕрлех, ун чухнехи пурнăçăн пур йенĕсене те чи вăйлă художник пек кăтартса парса, помешчиксен стройĕн тискерлĕхне хирĕç кĕрешме чĕннĕ. 19-мĕш ĕмĕрĕн пуçламĕшĕнчех Белинский обшчĕствăла кĕрешÿн хирне çĕнĕ класем, дворйансем пуçпулса тăрассине çĕмĕрсе тăкма пултаракан революцилĕ вăйсем килессе туйса илнĕ. Ленин Белинскине пысăк хак панă, ăна унчухнехи прогрессивлă етемлĕхĕн чи малта пыракан представителĕ вырăнне шутланă.

Вăл унчухнехи çамрăк ăрăвăн прогрессивлă пайне йĕртсе пынă, Некрасăв пек писателсене тĕрĕс çул çине кăларнă. Некрасăвăн политикăлă çивĕч поезийĕ Белинский пулăшнипе çуралнă, тепĕр майлă каласан, вăл Некрасăва хăйне тупма пулăшнă. Йулташĕсем хушшинче „чăрсăр Виссарион" йатпа çÿренĕ критик пур йапалана та çĕнĕле пăхса хакланă. Унăн кашни çĕнĕ статйи вырăс обшчĕствишĕн кĕтмен çĕнĕ йапала пек курăннă. Пушкин çинчен çырнă чаплă статйисем аслă поетăн творчĕствине тĕпчеснипе пĕрлех тата вырăс литературин историйĕ те, вырăссен обшчĕствăлă шухăшĕн историйĕ те пулса тăраççĕ.

Пысăк та тарăн шухăшсемлĕ Белинскине жандармсен цензури туса хунă йăвăр условисем хăйĕн талантне ирĕккĕн уçса, ете лĕхе мĕн пама пултарнине пĕтĕмпех парса хăварма чăрмантарнă. Ана художествăлă литературăна критиклесе çырнă статйисен хÿмисем хушшине кĕртсе йанă. Унтан ытла кайма çул памян. Акă мĕн çырат вăл ун пирки Боткин патне йанă çырура: „Çутçанталăк мана йытă пек вĕрме тата шаккал пек улама тунă, пурнăç условийĕсем хÿрене тилĕле выльатса, кушак пек марлатма хушаççĕ".

Белинский историне вырăссен паллă критикĕ тата чи пысăк политикăла кĕрешÿçĕ пулса кĕрсе йулчĕ. Унăн литературăлă йĕркерĕ пайанччченех хăйĕн хакне çухатман. Вăл вырăс халăхне Пушкин пек, Лермантăв пек, Гоголь пек, Достойевски пек, Гончаров пек, Герцăн пек пысăк писателсене палăртса, ăнлантарса пачĕ. Çав писателсем çинчен çырнă кивелми статйисем Белинскин йатне çалтăрсем пек çутатса тăраççĕ.

Белинскин хăй вилес умĕн кăшт çеç маларах Гоголь патне çырнă çырăвĕ революцилĕ демократин малашнехи ăрăвĕсемшĕн кĕрешÿ программи пулса тăнă. Ун çинчен Достойевскине çав çырăва вуланăшăнах вĕлерме сут туни те калах каласа парат.

Микулай патшапа помешчиксен государствине Белинский тем тĕрле питлене, хăйĕн тăван çĕршывне тата тăван халăхне чĕререн йуратнă.

„Вăл халăха хĕрÿлĕ революционер, тÿре кăмăлла кĕрешÿçе пулса йуратнă, çавăнпа та халăх тăшманĕсемпе хайарран кĕрешнĕ. 1841 çулта Белинский хăйĕн тусĕ—Боткин патне çапла çырса пĕлтерне:

„Епĕ Францире пулнă революцине ăнлантăм. Марат ирĕклехе йун йухтарса йуратнине те, вăл етемлĕхпе тусла пурăнассинчен уйăрлса кайакансене пурне те тарахса кураймасăр пурăннине те ăнлантăм. Епĕ етемлĕхе Маратла йуратма тытăнатăп".

Белинский сăмахсемпе выльама йуратман. Вăл мĕнле шухăшланă, çавăн пек тунă, никам умĕнче те икĕпитленмен. Ирланах пĕр сăн сăпат—революционерăн сăн сăпачĕ пулнă унăн. Вăл пусмăрлăх тĕнчине халăх çĕмĕрсе тăкассине ĕненсе вилнĕ.

Российăра кашни йĕркелĕ çын шăн Белинскийĕн йачĕ хаклă пулнă. Вăл хăйĕн ĕçĕсемпе халăха савăнтаракан, тăван çĕршывăн чапне çÿлĕ çĕклесе тăракан аслăран та аслă çынсен шутне кĕрет. Унăн мухтавлă йачĕ нихăçан сÿнми çутă çалтăр пек йалтăртатса тăрĕ. Ирĕке тухнă халăхсем унăн йатне йаланах ăшă кăмăлпа асăнса пурăнĕç.

ÿКЕРЧĔК СИНЧЕ: Виссарион Григорйĕвич Белинский (1811—1848). И. А. Асафйĕв художник ÿкерчĕкĕнчен (Сойузфото репродукцийĕ)

Пĕтĕм Сойузри Йалхуçалăх выстăвкин „Тĕштыра" тата зонăлă павилйонĕсенче пулма кĕртнĕ кандидатсен 1-мĕш номĕрлĕ списакĕ*)

Пĕтĕм Сойузри Йалхусалăх выстăвкин комитечĕ 1938 çулти апрелĕн 23-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче Пĕтĕм Сойузри Йалхуçалăх выстăвкин „Тĕштыра" тата зонăлă павилйонĕсем тăрăх, пĕрремĕш номĕрлĕ спискăн кандидачĕсене çирĕплетнĕ. Çав ларура çирĕплетнĕ кандидатсен хисепĕнче Чăваш республикинчен 163 колхоз.

Пĕтĕмпе малтан çирĕплетнисемпе пĕрле 532 колхоз шутланаţ.

Выстăвкăра пулма пур тĕштырăсем тăрăх та пĕтĕм лаптăкран вăтам хисеппе кашни гектар пуçне 15 центнĕртан кайа мар илнĕ колхозсем права илме пултарассĕ.

№№	Пĕтĕм Сойузри Йалхуçалăх выставкинче пулма çирĕплетнĕ кандидатсем	Тĕштыра акнă лаптăк гектарпа	1938 çу-та колхоз вăтам хисеппе пĕр гектартан илнĕ тухăç
370	Ленин йачĕпе тăракан колхоз, Вăрнар районĕ	414,0	17,2
371	Чапайĕв йачĕпе тăракан колхоз, Вăрнар районĕ	462,1	16,6
372	„Партизан" колхоз, Вăрнар районĕ	238,6	17,1
373	Пушкин йачĕпе тăракан колхоз, Вăрнар районĕ	254,4	17,9
374	„Совет" колхоз, Хĕрлĕ Чутай районĕ	109,0	16,3
375	„Агроном" колхоз, Хĕрлĕ Чутай районĕ	344,0	15,9
376	„Красное Сормово" колхоз, Хĕрлĕ Чутай районĕ	199,3	17,5
377	Крупскайа йачĕпе тăракан колхоз, Йетĕрне районĕ	101,1	15,7
378	„Мартăн 8-мĕшĕ" колхоз, Йетĕрне районĕ	161,3	16,1
379	„Çĕнĕ çул" колхоз, Шăмат йалсовечĕ, Йетĕрне районĕ	172,4	16,8
380	„Çĕнĕ çул" колхоз, Тенкеш йалсовечĕ, Йетĕрне районĕ	93,3	16,0
381	„Хĕлхем" колхоз, Йетĕрне районĕ	234,5	16,0
382	Молăтав йачĕпе тăракан колхоз, Йетĕрне районĕ	103,3	15,0
383	Чапайĕв йачĕпе тăракан колхоз, Йетĕрне районĕ	229,0	16,0
384	„Комсомол" колхоз, Йетĕрне районĕ	117,9	16,7
385	„Коминтерн" колхоз, Йетĕрне районĕ	[illegible]7,9	16,7
386	„Заря" колхоз, Шăмăршă районĕ	252,7	17,7
387	М. Горький йачĕпе тăракан колхоз, Шăмăршă районĕ	60,2	16,7
388	„Правда" колхоз, Шăмăршă районĕ	386,8	17,1
389	„Красное Сормово" колхоз, Трак районĕ	643,7	18,2
390	„Вăй" колхоз, Трак районĕ	215,2	18,4
391	„Ленин çулĕ" колхоз Вăрнар районĕ	237,7	19,4
392	Уйкас-Йавăш колхозĕ Вăрнар районĕ	311,0	18,1
393	„Çĕнĕ йал" колхоз, Вăрнар районĕ	253,0	19,4
394	Чапайĕв йачĕпе тăракан колхоз, Вăрнар районĕ	47,0	15,6
395	„Правда" колхоз, Вăрнар районĕ	166,2	17,8
396	„Çĕнĕ çул" колхоз, Вăрнар районĕ	184,7	15,7
397	„Ударник" колхоз, Вăрнар районĕ	113,9	17,3
398	„Суттала" колхоз, Вăрнар районĕ	268,0	15,2
399	„Клевĕр" колхоз, Вăрнар районĕ	300,0	16,6
400	„Коммунар" колхоз, Патăрйел районĕ	309,0	17,9
401	„Сормово" колхоз, Патăрйел районĕ	193,2	18,9
402	Чапайĕв йачĕпе тăракан колхоз, Патăрйел районĕ	111,7	15,7
403	„Култура" колхоз Патăрйел районĕ	432,7	15,4
404	Красин йачĕпе тăракан колхоз, Патăрйел районĕ	252	20,8
405	„Канаш" колхоз, Патăрйел районĕ	313,4	19,2
406	„Трактăр" колхоз, Патăрйел районĕ	237,6	20,4
407	Пушкин йачĕпе тăракан колхоз, Патăрйел районĕ	191,3	18,3
408	„Новый быт" колхоз, Йетĕрне районĕ	102,8	17,7
409	„Хĕрлĕ фронтовик" колхоз, Йĕпреç районĕ	540,6	17,2
410	„Хĕрлĕ Октябĕр" колхоз, Йĕпреç районĕ	119,2	15,3
411	Буденнăй йачĕпе тăракан колхоз, Йĕпреç районĕ	181,6	16,1
412	Калинин йачĕпе тăракан колхоз, Вăрнар районĕ	450,2	16,5
413	Кирăв йачĕпе тăракан колхоз Тăвай районĕ	558,9	15,5
414	„Трудовик" колхоз, Тутаркас районĕ	56,9	17,3
415	„Страж революции" колхоз, Тутаркас районĕ	226,1	19,2
416	„Хĕлхем" колхоз, Тутаркас районĕ	154,2	18,9
417	„Динамо" колхоз, Тутаркас районĕ	297,6	17,3
418	Енгĕлс йачĕпе тăракан колхоз, Тутаркас районĕ	173,7	16,8
419	„Çĕнĕ çул" колхоз, Шăхасан районĕ	256,6	15,3
420	Телмăн йачĕпе тăракан колхоз, Шăхасан районĕ	356,5	15,2
421	„Олешево" колхоз, Шăхасан районĕ	58,2	15,3
422	„Майăн 1-мĕшĕ" колхоз, Шăхасан районĕ	123,0	17,8
423	Доронин йачĕпе тăракан колхоз, Тутаркас районĕ	99,0	17,8
424	Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз, Тутаркас районĕ	80,4	18,1
425	„Красная Чувашия" колхоз, Тутаркас районĕ	62,9	15,4
426	Мичурин йачĕпе тăракан колхоз, Тутаркас районĕ	61,8	15,8
427	„Кубас" колхоз, Тутаркас районĕ	123,8	15,2
428	„Калиновка" колхоз, Шăхасан районĕ	124,0	18,6
429	„Правда" колхоз, Шăхасан районĕ	322,5	16,6
430	„Майăн 1-мĕшĕ" колхоз, Шăхасан районĕ	40,5	21,0
431	„Ака Туй" колхоз, Шăхасан районĕ	94,4	17,6
432	„КИМ" колхоз, Тутаркас районĕ	111,7	18,2
433	Жданăв йачĕпе тăракан колхоз, Тутаркас районĕ	125,5	15,8
434	1905 çулхи Революци йачĕпе тăракан колхоз, Тутаркас районĕ	160,4	16,6
435	„Первая борозда" колхоз, Тутаркас районĕ	156,6	17,0
436	Молăтав йачĕпе тăракан колхоз, Шăхасан районĕ	218,0	16,8
437	„Париж Коммунĕ" колхоз, Шăхасан районĕ	152,0	15,0
438	Калинин йачĕпе тăракан колхоз, Шăхасан районĕ	32,1	20,0
439	„Пионер" колхоз, Шăхасан районĕ	278,5	16,7
440	Чкалăв йачĕпе тăракан колхоз, Шăхасан районĕ	135,0	16,7
441	„Çĕнтерӳ" колхоз, Шăхасан районĕ	462,6	18,2
442	„Хĕрлĕ Октябĕр" колхоз, Шăхасан районĕ	442,7	15,6
443	„Ударник" колхоз, Вăрмар районĕ	160,2	17,0
444	Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз, Вăрмар районĕ	363,0	15,0
445	„Вутлан" колхоз, Вăрмар районĕ	151,5	16,9
446	„Хĕрлĕ Шептах" колхоз Вăрмар районĕ	378,0	15,8
447	„14 лет Октября" колхоз, Çĕмĕрле районĕ	215,0	17,1
448	„Суттала" колхоз, Шăхасан районĕ	292,5	16,0
449	„Ирĕклĕх" колхоз, Шăхасан районĕ	263,6	15,1
450	„Хĕрлĕ Çар" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	92,7	17,2
451	„Балтиец" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	92,2	18,3
452	Сталин йачĕпе тăракан колхоз, Сĕрпӳ районĕ	155,6	18,9
453	„Хĕрлĕ Октябĕр" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	234,8	15,4
454	„Майăн 1-мĕшĕ" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	101,6	15,2
455	„Çĕнĕ пурнăç" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	501,2	17,6
456	„Вучах" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	123,7	16,7
457	„Çĕнĕ çул" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	98,0	16,5
458	„Память Ленина" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	425,6	17,9
459	„Çĕнĕ çĕнтерӳ" колхоз, Елĕк районĕ	126,3	16,8
460	„Кзыл Елем" колхоз, Шăнкăртам районĕ	358,3	15,5
461	„Комсомолец" колхоз, Елĕк районĕ	178,8	15,0
462	„Труженник" колхоз Хĕрлĕ Чутай районĕ	57,6	16,5
463	„Коммунар" колхоз, Тутаркас районĕ	163,3	16,2
464	„Майăн 1-мĕш" колхоз, Тутаркас районĕ	243,3	17,4
465	„Çĕнĕ Чемей" колхоз, Тутаркас районĕ	62,4	17,9
466	„Августăн 1-мĕшĕ" колхоз, Тутаркас районĕ	261,3	16,5
467	Тельмăн йачĕпе тăракан колхоз, Тутаркас районĕ	156,7	15,0
468	„Аврора" колхоз, Тутаркас районĕ	203,9	16,3
469	„Ударник" колхоз, Тутаркас районĕ	481,4	15,1
470	„Сатурн" колхоз, Тутаркас районĕ	224,4	15,4
471	„Металист" колхоз, Тутаркас районĕ	192,1	15,2
472	„Ĕç йалавĕ" колхоз, Тутаркас районĕ	245,2	16,1
473	„Глиссер" колхоз, Тутаркас районĕ	107,6	16,3
474	„Хресчен" колхоз, Тутаркас районĕ	96,5	16,3
475	„Смычка" колхоз, Тутаркас районĕ	98,8	15,3
476	„Авангард" колхоз, Тутаркас районĕ	428,3	15,2
477	„Ирĕклĕх" колхоз, Тутаркас районĕ	587,0	15,7
478	Сталин йачĕпе тăракан колхоз, Вăрмар районĕ	72,5	16,4
479	Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз, Шупашкар районĕ	225,5	15,2
480	„Ленин çулĕ" колхоз, Патăрйел районĕ	1268,5	15,9
481	„Хунав" колхоз, Патăрйел районĕ	147,0	17,2
482	„Хĕрлĕ йалав" колхоз, Йелчĕк районĕ	215,2	18,4
483	Калинин йачĕпе тăракан колхоз, Йелчĕк районĕ	492,9	19,4
484	„Красная Чувашия" колхоз, Турхан районĕ	189,6	16,3
485	„Большевик" колхоз, Турхан районĕ	121,0	20,0
486	„Социализм çулĕ" колхоз, Турхан районĕ	140,1	17,9
487	Калинин йачĕпе тăракан колхоз, Турхан районĕ	77,4	16,8
488	„Сталинград" колхоз, Турхан районĕ	456,8	16,6
489	„Трудовик" колхоз, Турхан районĕ	181,3	17,0
490	„11 лет Чувашии" колхоз, Турхан районĕ	61,0	17,5
491	„Комсомолец" колхоз, Турхан районĕ	401,0	17,3
492	„Париж коммунĕ" колхоз, Турхан районĕ	31,5	17,5
493	Буденный йачĕпе тăракан колхоз, Турхан районĕ	159,8	18,0
494	Чапайĕв йачĕпе тăракан колхоз, Турхан районĕ	38,3	16,4
495	„Заря" колхоз, Турхан районĕ	77,9	17,1
496	„Пионер" колхоз, Турхан районĕ	191,7	17,8
497	„1905 çул" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	419,0	17,8
498	„Заря" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	90,0	18,0
499	„Луч" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	70,5	16,5
500	Жданăв йачĕпе тăракан колхоз, Сĕрпӳ районĕ	120,7	15,4
501	„Пучах" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	225,0	16,3
502	„Çăлтăр" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	157,2	16,6
503	„Канаш" колхоз, Шăмăршă районĕ	88,6	19,7
504	„Çĕнĕ йал" колхоз, Шăмăршă районĕ	474,5	17,2
505	Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз, Турхан районĕ	179,4	17,6
506	Кирăв йачĕпе тăракан колхоз, Турхан районĕ	179,4	17,6
507	Чапайĕв йачĕпе тăракан колхоз, Трак районĕ	237,0	17,4
508	„Венера" колхоз, Трак районĕ	92,3	16,3
509	„Большевик" колхоз, Трак районĕ	59,0	16,7
510	Мичурин йачĕпе тăракан колхоз, Турхан районĕ	111,5	15,7
511	„Париж коммунĕ" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	120,8	19,4
512	„Правда" колхоз Сĕрпӳ районĕ	76,3	18,3
513	„Хĕрлĕ самолет" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	106,1	15,7
514	„Большевик" колхоз, Шăхасан районĕ	339,0	16,4
515	Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз, Сĕнĕ Мами йалсовечĕ, Шăхасан районĕ	262,7	15,9
516	„Хĕрлĕ Паварн" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	426,0	16,0
517	„Сосновка" колхоз Шăхасан районĕ	119,4	17,5
518	Сталин йачĕпе тăракан колхоз, Шăхасан районĕ	184,0	18,7
519	Ворошилов йачĕпе тăракан колхоз, Шуркасси йалсовечĕ, Шăхасан районĕ	348,3	16,0
520	„Борец" колхоз, Шăхасан районĕ	136,2	15,5
521	„Красноармеец" колхоз, Турхан районĕ	84,5	17,8
522	Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз, Турхан районĕ	315,5	17,5
523	„Хĕрлĕ флот" колхоз, Сĕрпӳ районĕ	264,1	15,2
	УРПА ТĂРĂХ		
524	„Трудись" колхоз, Йетĕрне районĕ	17,0	19,8
525	„Бригадир" колхоз, Тутаркас районĕ	17,7	17,4
526	„Прожектор" колхоз, Шăхасан районĕ	5,5	36,4
527	„Ядро" колхоз, Тутаркас районĕ	28,7	18,6
528	„Смычка" колхоз, Йетĕрне районĕ	3,1	19,3
529	„Сталь" колхоз, Хĕрлĕ Чутай районĕ	5,0	19,2
530	Калинин йачĕпе тăракан колхоз, Тутаркас районĕ	21,0	21,7
	СУРХИ ТУЛĂ ТĂРĂХ		
531	„Хĕрлĕ Шăхаль" колхоз, Вăрмар районĕ	84,0	15,9
	СĔЛĔ ТĂРĂХ		
532	„Красный Дол" колхоз, Шупашкар районĕ	5,5	24,4

*) Пуçламăшĕ „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн 76-мĕш номĕрĕнче.

Испанири фронтсенче

Ийунĕн 3-мĕшĕнче Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтра, Теруел провинцинче çапăçусем пĕр кун кунĕнех пынă. Пăлхавçăсем пуринчен ытла атакăсене Теруелтен кăнтăрпа хĕвелтухăç йенелли вырăнсем çине тăвассĕ. Пăлхавçăсем Сагунтонпа кайакан çул урлă каçма хăтланнă, анчах республика çарĕсем пăлхавçăсене кайала хăвалаçа йанă.

Республиканĕцсем пăлхавçăсен ытти атакисене те йăлтах сирсе пăрахнă. Сывлăшри çапăçура республиканĕцсем фашиссен пĕр самолетне персе антарнă.

Мааригалехоран кăнтăрпа хĕвелтухăçнеле (кăнтăрти фронт) республика çарĕсем çӳлĕ вырăнсене чылай йышăнса илнĕ.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

Ийунĕн 3-мĕшĕнче фашиссен самолечĕсем Таррагонă çине пырса бомбăсем пăрахнă. Çурăлса саланса кайакан бомбăсем пурĕ 20 пăрахнă тата вут тивертсе йараканнисене 40 бомба пăрахнă. Малтанлăха шута илнĕ тăрăх, 10 çын вилнĕ, 25 çын аманнă. 15 çурта ишĕлтерсе антарнă.

(ТАСС).

Республикăлă Испанийе пулăшни

Барселонăран пĕлтернĕ тăрăх, ачасене хӳтлекен пĕтĕм тĕнчери комитет Испанийе пĕр мĕлйуна йахăн Франци франкĕлĕх апат-çимĕçсем йанă. Вăрçă пуçланнăранпа вăл комитет апат çимĕçсемпе тумтирсем 7 мĕлйун франклăх йанă.

Испанийе пулăшакан пĕтĕм тĕнчери комитет май уйăхĕ хушшинче 700 пин франклăх апат-çимĕç йанă.

Çав хушăрах пĕтĕм тĕнчери санитари комитечĕ 500 пин франклăх емелсем тата санитари грузовикĕсем йарса панă.

(ТАСС).

„Спартак" обшчĕствин çĕнĕ стадионĕ

Ку вăхăтчев Шупашкарта „Темп" обшчĕствин стадионĕ çеç пулнă. Физкултурăпа спорт ĕçĕ саралса, вăйлăланса пына май, пĕр стадион ниепле те çителĕклĕ пулма пултараймасţ. Çавăнпа та „Спартак" обшчĕстви кăçалхи çул хăй вăйĕпе стадион тума йышăнчĕ. Çĕне стадиона йĕркелеме 2.500 тенкĕ укçа хывнă. Çĕнĕ стадион хĕлле каток пулнă вырăнта пулаţ. Лаптăкĕш тĕлĕшĕнчен „Темп" обшчĕствин стадионĕпе танаштарсан, пĕчикрех пулин те, оборудовани тĕлĕшĕнчен лайăхрах. Стадионра футбол вылямали вырăнсăр пуçне баскетбол, волейбол, городкисем выляамали вырăнсем туна. 100 тата 60 метр чупмали çул тунă. Стадионрах душ пур. Выляакансемпе курма пына çынсем вальли канмали тата хаçат-журналсем вуламали, шашкăпа шахмăт выляамали пӳлĕмсем пулаççĕ. Çитес кунсенче стадионра кулленех ĕçлекен буфет пулаţ. Ийунĕн 5-мĕшĕнче „Спартак" обшчĕствин стадионĕ ĕçлеме тытăнчĕ.

Йалсовет председателĕсен курсĕ

Кăçал, майăн 23-мĕшĕнче Улатăр хулинче, Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕ йалсовет председателĕсемпе райĕçтăвкомсен инструктăрĕсене хатĕрлесе кăларакан тăватă уйăхлăх курс уçрĕ.

Вăл курсра пурĕ 150 çын вĕренмеле. Анчах пайанхи куна 78 çын çеç вĕренеççĕ.

Парачкав, Турхан, Шăвкăртам районĕсем пайанхи куна та пĕр çынна та вĕренме йамаń. Вăхăта чăсмасăр пур райĕçтăвкомсен те вĕренме çынсене уйăрса, халех курса йамала.

Хĕрачана вĕлерме тăнăшăн

Анат Йавăш йалĕнчи (Йетĕрне р.) Порфири Андрейĕв хăйĕн арăмĕпе пĕччен пурăнакан тăлăх хĕрача Павăлăвă патне пурăнма куснă.

Пурнă çиле вĕсем Павăлăвăна хĕсĕрлеме, апат çиме памасăр пурăнма тытăннă. Павăлăвăна кăларса йама шухăшланă. Апрелĕн 15-мĕшĕнче Андрейĕв, Павăлăвăна вĕлерсе унăн килсурчĕсемпе хуçа пулас шухăшпа, ăна Йетĕрне пасарне илсе кайаţ. Çул çинче вăл пĕчĕк хĕрачана, йурийех çынсем çӳремен çулпа илсе кайса, Çăр шывне тытса ывăтаţ. Сурхи шыв вăйлă йухнипе тата хум вăйлă пулнипе Павăлăвăн вăйне хавшатнă. Вăл пĕтĕм вăйне йухса сыран хĕрине ншсе пыраţ. Анчах ăна Андрейĕв шывра пусарса тăраţ те, каллах тĕпнеле тĕртсе йараţ. Çав вăхăтра Çăр шывĕн тепĕр йенче пулаççем пулнă. Вĕсем Андрейĕв хĕрачана шыва тĕртсе йанине курса кăшкăрма тытăнассĕ, Павăлăвăна вилĕмсен хăтарассĕ.

Андрейĕв хăйĕн ирсĕр ĕçне пытарас шухăшпа Урапакассинчи Казамбайĕва ĕçтерсе урăхла калама свидетĕл тунă. Казамбайĕв судра „Павăлăвă шыва кимĕ çинчен ӳпĕнсе кайса кĕрсе ӳкрĕ" тесе суйнă.

Йетĕрне районĕнчи халăх сучĕ майăн 27-мĕшĕнче çак ĕçе пăхса тухса, Андрейĕва 6 çул хушши тĕрмере хупса усрамала, тĕрмерен тухсан икĕ çул хушши суйлав прависăр хăвармала, Казамбайĕва суйса каланăшăн пĕр çул хушши тĕрмере хупса усрамала турĕ.

М. Йемелйанăв

Тĕрĕсленсе килнĕ заметкăсем тăрăх

Лазарĕв йалкор Упакассинчи пуçламăш шкулти (Йетĕрне районĕ) çитменлĕхсем çинчен çырса пĕлтернĕччĕ. Çак заметкăна Йетĕрне районĕнчи çутĕç пайĕ тĕрĕслесе тухнă. Заметкăра кăтартнă фактсем тĕрĕс пулнă. Шкулти çитменлĕхсемшĕн Иванов Çтепана выговăр панă, шкул пуçлăхĕнче ĕçлеме урăх çынна лартнă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Уйпилемĕчри „Опыт" колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ Памикăв Тимофей 4 колхоз лашине колхозниксен пухăвĕнчен ыйтмасăрах сутса йанă, фермăри икĕ ĕне выçăпа вилнĕ, икĕ лашине Атăл шывне йарса вĕлернĕ. Çакăн çинчен çырнă заметкăна „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцийĕ Сĕнтĕрвăрри районĕнчи прокурор патне тĕрĕслеме йанăччĕ. Памикăва УК 116 тата 118-мĕш статйасем тăрăх ответ тытармашкăн ĕçĕ халăх судне панă.

„Кулаксем йăва çавăрнă" заметкăра пĕр колхозник „Трактăр" колхоз кладовщике арманти кĕреçе çăнăхне тивĕçлипе учота илсе пыманни тата çак ĕçре арман контролерĕ Леонтйĕв йулташ нимĕнле мерă та йышăнманни çинчен çырса пĕлтернĕччĕ. Çак заметкă тăрăх ĕçе тĕрĕслесе колхоз кладовщикне ĕçрен кăларнă.

„Чаплă хулиган" йатлă заметкăра Вăрмар районĕнчи „Херле Шахаль" колхоз председателĕ Чернов Григорий хулиганла ĕçсем туса çӳрени çинчен çырнă йалкор çырăвне Вăрмар районĕнчи милици тытăмне тĕрĕслеме йанăччĕ. Факт тĕрĕс пулнă, Чĕрнов ĕçĕ тăрăх уголовнăй ĕç пуçарма милици прокурора пĕлтернĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Чăвашпромсойуза

аслă бухгалтĕрсем 2
бухгалтĕрсем 2

к и р л ĕ

Адрĕс: Театральная 3, Чувашпромсоюз, отдел кадров. Телефон № 0—19.
2—1

Ийунĕн 7-мĕшĕнче,
кăнтăрла 12 сехетре
Чăвашавтогужтрестра
(Союзная, 4)
лаша (йăр) сутмали
ТОРГИ ПУЛАŢ
Лаша 10 çулта
Чăвашавтогужтрест.

Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ 1938 çулхи майăн 17-мĕшĕнче кăларнă приказ тăрăх, Чăвашторгăн Куславкăри уйрăмĕ малашне хăй тĕллĕн ĕçленĕ

хозрасчотлă организаци
ш у т л а н м а с ţ.

Претензисем пур пулсан, икĕ ерне хушшинче ликвидкома тăратмала.

Адрĕс: г. Чебоксары, ул. Ленина д. №11.
ЛИКВИДКОМ.

ШУПАШКАРТИ „БАКАЛЕЯ" МАГАЗИННЕ

Тавар уйрăмĕн пуçлăхĕсем, продавецсем, кассирсем

к и р л ĕ

Çак адрĕспе пымала: Красная площадь, д. № 3, в контору.
2—2

„СПОТАРА"
Чăваш республикинчи кантурĕ

Вăрман хатĕрлев ĕçĕнче йалан ĕçлеме тата çакнашкал специальноçсемпе ĕçлеме рабочисене йышăнаţ:

Вутă турттаракансем (кантур лашисемпе).
Йăвăç касакансем.
Станочниксем (станоклă çавра пăчкăсемпе ĕçлеме).
Прийомщиксем.
Рабочисем (тĕрлĕрен ĕçсенче ĕçлеме).

Çак адрĕспе пымала: гор. Чебоксары, Красноармейская, № 5, Контора „Спотара"
2—1

Пайан кинотеатрта	саслă, çĕнĕ кино-драма „КОМСОМОЛЬСК"

СТЕНОГРАФИПЕ МАШИНĂПА
çырма вĕрентекен курссем вĕренме илесси çинчен
п ĕ л т е р е ç ç ĕ
вĕренмели срук 10 уйăх

Курсра стенографистка-машинистка—ĕçтăвакан-секретарсене вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

Зайавленисене августăн 1-мĕшĕнчен йышăнаççĕ. Испытанисем августăн 20-мĕшĕнчен 25-мĕшĕнчен пулаççĕ. Занятисем сентябĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ. Вĕренме кĕрекенсене вырăс чĕлхипе тата политграмăтăпа испытани тăваççĕ Вăтам шкултан вĕренсе тухнисене испытанисемсĕрех илеççĕ.

Зайавленипе пĕрле çак документсем кирлĕ:
Малтан вĕренни çинчен справкă,
2 фотокартăчкă,
Автобиографи,
Паспарта пĕрле илсе пыраççĕ. Ĕçленĕ вырăнтан характеристика.

Вĕрентнĕшĕн унçа илеççĕ.

Занятисем производствăран уйăрлмасăр, каçхине вĕрентеççĕ.

Адрĕс: г. Чебоксары, ул. Чернышевская 3, Центральная библиотека. тел. № 4—05.

Курсы стенографии и машинописи.

2—1

Чăвашсен музыкă училишчи
1938—39 ВĔРЕНӲ ÇУЛĔНЧЕ
подгруппăна çакнашкал уйрăмсене вĕренме
ИЛЕССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ

вокальнăй уйрăмĕ, 6 çул вĕренмеле;
оркестăр „ 5 „ „
фортепиана „ 6 „ „
музыкă-педагогика уйрăмĕ, 6 çул вĕренмеле.

Вĕренме 15 çулхисенчен пуçласа 25 çула çитнĕ хĕрарăмсене тата арçынсене, вăтам шкулта 7 çултан кайа мар вĕреннисене илеççĕ.

Зайавленисене ийунĕн 15 мĕшĕнчен пуçласа августăн 15-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Зайавленисене училищă директăрĕ йачĕпе памала, пĕрле çакнашкал документсем кирлĕ:

Вĕренни çинчен свидетĕлства.
Хăш çулта çуралнине кăтартакан свидетĕлства.
Сывлăх пирки тухтăртан илнĕ справкă.
Икĕ фотокартăчкă, кашни çине хăйĕн ал пусни пулмала.

Испытание тăма ирĕк панисене испытанине уйрăм повескăсемпе чĕнеççĕ.

Испытанисем августăн 20—25-мĕш кунĕсенче пулаççĕ.

Училищăна вĕренме кĕрес текенсене сас, хăлха илтĕнĕвĕ тата ритмă тăрăх сăнаççĕ. Кунсăр пуçне испытанире общеобразовательнăй предметсемпе туллимар вăтам шкулсен программи тăрăх ыйтаççĕ.

Пĕрремĕш курса кĕрес текенсенчен хушса çак предметсем тăрăх тĕрĕслӳ пулаţ:

Специальнăçпа,
Музыкăпа теорипе тата сольфеджиопа.

Ачасен музыкă шкулне 8 çулхисенчен пуçласа 15 çула çитнĕ ачасене илеççĕ.

Музыкă училищинче, çавăн пекех, шкула вĕренме кĕнисене стипенди параççĕ, хватер çуккисем вальли обшежити пур.

Занятисем çентябĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Адрĕс: г. Чебоксары, ЧАССР, ул. Чувашская № 1, Музыкальное училище
ДИРЕКЦИ.

Колхоз уйхирĕсенче

Украинă

Украина СС Республикинче тырпул пит вăйлă пулассине кĕтеççĕ. Ийунĕн 1-мĕшне кĕрхи тыра калчисем 83 процент, çурхи тырăсем 80 процент „лайăх" тата „питĕ лайăх" тесе хаклаççĕ. Сахăр кăшманĕ калчине те çавăн пекех хаклаççĕ.

Куйбышĕв облаçĕ

Облаçри уйхирсенче тыра калчисем хăвăрт ӳсеççĕ. Кĕрхи тырăсен калчисем пур çĕрте те лайăх тата питĕ лайăх. Çурхи тырăсен калчисем те аван шăтнă. Ыраш пуç кăлараţ, вырăнĕ-вырăнĕпе шăркана ларма пуçлаţ. Унăн çӳллĕшĕ 114—116 сантиметăра çитет. Кĕрхи тулă кĕпçеленме тытăнаţ. Çурхи тулăпа сĕлĕ калчисем хунаççĕ. Çĕрулми, хĕвелçавăрнăш тата ытти культурăсен калчисем те аван.

Туркмен СС Республикĕ

Марый тата Байрам-Али районĕсенчи колхозниксем суйлав умĕнхи социалисăмла ăмăртува хутшăнса, Туркмен СС Республикĕн Верховнăй Советнĕ суйламали кун—уйунĕн 24-мĕшĕ—тĕлне çĕрмамăк калчи акнă çĕре пилĕк хут пит лайăх кăпкалатма палăртнă, Ийунĕн 1-мĕш тĕлне икĕ районĕнче те икĕ хут кăпкалатнă та ĕнтĕ.

Малта пыракан чылай колхозсем çĕрмамăк калчи лартнă çĕре тăваттăмĕш хут кăпкалатма тытăннă. Çĕрмамăк калчи кăçал лайăх ӳсет, çĕрмамăк лайăх пулассине шантараţ.

(ТАСС).

Уполномоченный Чувашглавлита № 290
Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтрест. Заказ № 500.